# Чăвашăн тĕнче курăмĕ те укça тавра кăна аталанма пуçларĕ... • 3 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*


ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

10 (828) №, 2014, пуш, 15

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



**Хĕрарăм шучĕпе пурăнма юратакан арçынсене шыраса сунара тухнă Хĕрестин.** 4 стр.

**Пуйăс килнине курсах чукун çул урлă каçма васкани нумай чух инкекпе вĕçленет.** 5 стр.

**Вăрра тĕрĕс акни кĕркунне пысăк тухăç илме пулăшĕ.** 8 стр.

**Телей кайăкĕ çунаттипе перĕнме маннă-ши?** 9 стр.

**Кӳршĕсен пултарулăхĕ – “Хусанта” роман сыпăкĕ.** 10 стр.

**Тĕнчери чи хитре кукамай.** 11 стр.


*Хĕлхем пулсан вутă чĕрĕлет.*

Калараш.



ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 15.03 | + 3 | + 3 | |
| 16.03 | + 4 | - 1 | |
| 17.03 | + 2 | - 8 | |
| 18.03 | + 1 | -11 | |
| 19.03 | - 2 | -10 | |
| 20.03 | + 1 | -10 | |
| 21.03 | + 2 | + 6 | |

4 стр.



# Урхамах чунне кусран пăхса туяççĕ

**Шупашкартан Комсомольски салине кĕнĕ çĕртен инçех те мар ипподром вырнаçнă. Унталла çывхарнăçемĕн пысăках мар йывăç пӳрт, тимĕр çапса тунă вите, вакун прицепĕ асăрхарăм. Утă купи тĕлĕнче хăмăр урхамахпа пони кавлесе тăраççĕ, кунтах чăхсемпе автан, кăрккасем çимелли шыраса хылчăк ăшĕнче чаваланаççĕ. Лаша картара тăрать пулсан пони ирĕкрех çӳрет. Ниçта та тармастьмĕн ку чĕр чун... Хуçи килнине курсан выльăхсем пуçĕсене çĕклерĕç, ун патне туртăнчĕç.**

## Хĕл каçнă

– Ял тăрăхĕн администрацийĕ ку çĕрсене, пурĕ 7 ытла, арендăна пачĕ. Виçĕ уйăх каялла кăна-ха фермер хуçалăхĕ йĕркелерĕм, унччен уйрăм предпринимательччĕ, – сăмах пуçартăмăр Петр Павловпа. Вăл Хирти Выçли ялĕнчен, тăван кил-çуртне çăра çаксах çакăнта хĕл каçнă кăçал. Кивĕ пĕр çурта сӳтсе килнĕ те хăвăрт кăна çĕклесе лартнă, стенасене шалтан ăшă тытмалла тунă, кăмака купаланă. «Шăнса вилмĕн-ши кунта?» – иккĕленнĕ хăшĕ-пĕри. Мĕн ĕлĕкрен вутă хутса пурăннине манса кайрĕç çав халĕ çынсем, Петр Васильевичшăн вара ку пĕртте йывăрлăх кăларса тăратман. Выльăхсем епле хĕл каçни те кăсăклантарчĕ мана. Вити ăшă тытаканскер мар-ха та. «Апат лайăх çитерсен шăнмаççĕ. Çут çанталăкра вĕсем чирлемеççĕ, хăйсене лайăх туяççĕ», – ăнлантарать ферма хуçи.

– Мĕншĕн килти витене хупас темерĕр? – выльăха шел пек туйăнчĕ çапах та.

– Усранă ĕнтĕ. 20 çула яхăн. Яла çитме – 20 çухрăм. Унтан лашасене вĕçĕмех кунта илсе килме чăрмавлă. Халĕ урăхларах тĕллевпе пурăнатăп. Ипподромра кунсеренех тренировка ирттеретĕп, пони те ахаль тăмасть, вĕçĕмех ĕçлет. Кунта, çул хĕрринче, кирек ăçта тухса çӳреме те меллĕ.

## Корифей

Тăвată ураллă туссем çинчен ытларах пĕлес килчĕ. Ăйăра пĕлтĕр Хусантан илсе килнĕ. 150 пин тенкĕ тăраканскере туянмашкăн арçын машина сутнă. Корифей – утланса çӳремелли лаша, акăлчансен таса йăхĕнчен. Вăл çамрăкха, 4-ра кăна. Пĕлтĕр хуçи утпа Патăрьел районĕнчи Шăнкăртамра иртнĕ пĕтĕм Раççейри ял сабантуйне хутшăннă.

**“Чăваш хĕрарăмне” çитес çур çуллăха пуш уйăхĕн вĕçĕччен хальхи хакпа çырăнтараççĕ!**



ЯТ-СУМ



# Ун çумне пылчăк та çыпăçмĕ,

## е Ентешĕмĕр аякри хулара йĕрке туни çинчен

**Эсир ман пекех çул çӳреме юрататăр-и? Апла-тăк, атьăр-ха, Ненец автономи округĕн тĕп хулине Нарьян-Мара çитсе килер. Чăвашсемшĕн мĕнпе кăсăклă-ха çав тăрăх? Чи малтанах, унта пирĕн ентешсем хăтлăх тупнă. Шăпах вĕсем юлашки çулсенче тавралăх çĕнелсе улшăнни çинчен каласа кăтартрĕç. Çакăнта чăваш хĕрарăмĕн тӳпи пысăк. 2012 çулта хула пуçлăхне суйланнă Татьяна Федорова Йĕпреç районĕнчи Кăшмасра çуралнă. Хусанти инженерипе строительство институтĕнче, Ленинградри парти шкулĕнче пĕлӳ илнĕ вăл. «Псковгипроводхоз» проект институтĕнче инженер конструкторта, «Йĕпреçгражданстрой» строительство управленийĕнче пай пуçлăхĕнче, «Амдермастрой» строительство организацийĕнче аслă инженерта ĕçленĕ. Амдермăна аталантарассишĕн нумай тăрăшнă чăваш хĕрарăмĕ. Поселок пуçлăхĕн тилхепине 15 çул çирĕп тытнă Татьяна Васильевна.**

Вăр-вар та лара-тăра пĕлменскерĕн ĕçне унăн çумĕ Мария Сушкова çапла хаклать: «1989 çулта пĕрремĕш хут тĕл пулнăччĕ унпа. Ун чухнех хваттер ыйтăвĕ çивĕччĕ. Нумайăшĕ черет çитессе кĕтсе общежитире пурăнатчĕ. Пулăшу шыраса килнĕ пĕр хĕрарăм халĕ те куç умĕнче. Ачисем пĕчĕк, мăшăрĕ сарăмсăр вилнĕ... Çак çемье хваттер черетне тăма ĕлкĕреймен, апла тăк саккун тăрăх администраци вĕсене уйрăм кĕтеспе тивĕçтерме ирĕк çук. Татьяна Федорова ку ыйтăва 700 çынлă предприяти пухăвĕнче пăхса тухма сĕнчĕ. Ĕçтешĕсем çав хĕрарăм майлă пулчĕç, унăн инкекне чĕре çумне илчĕç. Çакăн хыççăнах çемьене 2 пӳлĕмлĕ хваттер уйăрса пачĕç. Савăнмалли сăлтав мар-и çакă?

Малтанхи çулсенче Татьяна Васильевна çар чаçĕсен ертӳçисемпе, федераци тытăмĕн пуçлăхĕсемпе туслă çыхăну йĕркелерĕ.

1992 çулта, укçа хăйĕн хакне çухатсан, унăн пӳлĕмне ватă хĕрарăм кĕрсе тăчĕ. Çав тери салху хăй. «Ачасене те пулин материк çинче пурăнмалли кĕтес илсе памашкăн 30 çул тар тăкрăм. Халĕ çакăнтах вилмелле-и пирĕн?» – терĕ вăл. Татьяна Васильевна ăна Амдерма ветеранĕсене урăх çĕре куçмашкăн пулăшма сăмах пачĕ. Çавна май Раççей Правительствин Пуçлăхĕпе Виктор Черномырдинпа тĕл пулма май тупрĕ Татьяна Федорова. Мĕн тетĕр? Çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ыйтăвĕсене татма, аэродрома тытса тăма, Амдерма ветеранĕсене лайăх климатлă региона куçарма федераци хыснинчен укçа уйăрчĕç.

Татьяна Васильевна йывăр кирек хăш ĕçе вĕçне çитерме пултарнинчен тĕлĕнеттĕм. Вăл çине тăнипех шыв пăрăхĕсене улăштарчĕç, тĕп котельнăя çĕнетрĕç, тавралăха тимĕртăмăртан, çӳп-çапран тасатрĕç. Çил хăвачĕпе ĕçлекен хатĕрсемпе анлă усă курма пуçлани те – ырă пулăм. Ун чухне поселок специалисчĕсем çула тухрĕç, датчиксен опытне ăша хывса таврăнчĕç.

Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен кашни шкула, ача садне юсаса çĕнетнĕ. Çакна поселок пуçлăхĕ хăй тĕрĕслесе тăчĕ. Çĕр-шывра темиçешер уйăх шалу тӳлемен вăхăтра та пирĕн тăрăх çыннисем выçă ларман. Ĕç укçине нумайран та икĕ эрне кая юлса паратчĕç.

Пăлан пăхакансем те ăна ырăпа çеç аса илеççĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче Амдерма поселок администрацийĕ вĕсене паспорт пачĕ. Çавна май ашшĕ-амăшĕ ача пособийĕ, ветерансем пенси илме пуçларĕç.

Татьяна Васильевна наци йăли-йĕркине хисеплет, хăйĕн вăйне шанать, йывăрлăхран хăрамасть, ун ячĕпе мухтав юрри пуçласса кĕтмест».

«Техникумран вĕренсе тухсан Татьяна Васильевна мана пурнăç çулĕ çине тăма пулăшрĕ. БТИ тытăмĕнчи çамрăк кашни специалистпа уйрăммăн калаçнишĕн, йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентнишĕн тав тăватăп ăна. Пушă вăхăта мĕнле иртерни те кăсăклантаратчĕ пуçлăха», – хушса калать Марина Рогачева.

«Вăл çынсене ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтерет. Çул, çурт-йĕр, урам ыйтăвĕсене татса парасси хăратмасть ăна. Пуçлăх пирĕншĕн кăна мар, ачасен, мăнуксен пуласлăхĕшĕн тăрăшать», – çирĕплетет Татьяна Окладникова.

«Татьяна Васильевна – таса чунлă çын. Вăл нумай йывăрлăха çĕнтернĕ. Ун çумне пылчăк та çыпăçмĕ», – ĕçтешĕсем чăваш хĕрарăмне çапла хăпартлантараççĕ.

### Туслăх хули

Çак кунсенче Нарьян-Мар 79 çул тултарнă. «Пирĕн пуласлăх çутă. Çулсерен халăх йышĕ хушăнсах пырать. «Çĕн кайăксен» пурнăçне хăтлăлатассишĕн пĕтĕм вăйран ĕçлеме шантаратăп. Вĕсем урăх çĕрте ырлăх ан шырачăр», – мэр сăмахĕсем кирек кама та хавхалантарасси иккĕлентермест.

Паян Нарьян-Марта /Хĕрлĕ хулара/ 23 пин ытла çын пурăнать. «Раççейĕн нумай регионĕнчен килнисене хапăлласа кĕтсе илчĕ вăл. Çавăнпах Нарьян-Мара туслăх хули теме пулать», – «Красный тундровик» хаçатра сăмах илет Татьяна Федорова.

Унăн ĕç-хĕлне вырăнти хаçат-журнал урлă йĕрлеме пулать. «Татьяна Федорова Нарьян-Марăн хула влаç пуçлăхĕн пуканне йышăннăранпа çур çул кăна иртрĕ. Вăл кулленхи кăткăслăх тата ĕмĕт-тĕллевĕ çинчен пĕр пытармасăр калать. Унăн чун çирĕплĕхĕпе хăватне ăмсанмалли çеç юлать. Çĕнĕ пуçлăхăн ĕçĕ куç умĕнчех: вăл тавралăха хăтлăх кĕртмешкĕн çынсене урама кăларчĕ. Халăх хулана чăн хуçа килнине ĕненет.

Вăл çынсене мĕн кирлине пĕлет. Çăкăр чĕллине никама кӳрентермесĕр халăхпа пайлать. Аслисене хисеплесси, çамрăксене пулăшасси пĕлтерĕшлĕ уншăн. Шăпах çакнашкал пуçлăхсен витĕмĕпе çынсем вырăнти влаçа хисеплеме пуçларĕç», – çырать «Муниципалитет» журналăн тĕп редакторĕ Людмила Куликова.

Статистика кăтартăвĕсем тăрăх – 2012 çултанпа Хĕрлĕ хулара ытларах çынна çурт-йĕрпе тивĕçтерме пуçланă. Пĕлтĕр, тĕслĕхрен, кивĕ 30 çуртра пурăнакансене çĕнĕ çĕре куçарнă. 106 çемьене пĕр пӳлĕмлĕ, 98-ăшне икĕ пӳлĕмлĕ, 44-шне виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер панă.

Вырăнти влаç кашни çыннăн ыйтăвне пăхса тухма палăртнă. Çакна Татьяна Васильевна çирĕплетсех калани витĕм кӳнĕ-ши – юлашки çулсенче администрацие пулăшу шыраса килекен йышлă. Вĕсенчен ытларахăшне çĕр ыйтăвĕ канăç памасть. Нарьян-Мар халăхĕ харпăрлăха куçарнă е арендăна илнĕ çĕр çинче çурт, гараж çĕклесшĕн.

Культурăна сыхласа хăварма тата аталантарма укçа-тенкĕ ытларах уйăрнă. Çакă пултарулăх ушкăнĕсене тĕнчен тĕрлĕ кĕтесне çитме май парать.

Татьяна Федорова кашни тенке ăçта тата мĕнле тăкакланине халăха каласа кăтартма хăнăхнă. Пултаруллă ачасене тупса палăртма та, физкультурăпа спорта аталантарма та, тăлăхсене çурт-йĕрпе тивĕçтерме те... вырăнти хыснаран укçа уйăрнă. Пуçлăх отчечĕсенчен çакăнта пурнăç вĕресе тăни сисĕнет.

### Парк та, кану центрĕ те кирлĕ

Çапах та мĕн çитмест-ши Нарьян-Мар халăхне? Хула уявĕнче çакăн тавра сăмах хускатни те вырăнлă. Журналистсем çакна та уçăмлатнă.

«Эпир çакăнта паллашнă, пĕрлешнĕ, 3 ача çуратнă. Хулара хваттер ыйтăвĕ май пур таран хăвăртрах татăлсан тем пекехчĕ. Пирĕн çакăнтан ниçта та каяс килмест. Юлашки вăхăтра Нарьян-Марта хитре вырăн нумайланчĕ. Пушă лаптăксемпе тĕллевлĕ усă курма пуçларĕç», – палăртаççĕ Кычинсем.

«Пахча çимĕç ларекĕсем вырăнне суту-илӳ центрĕ уçмалла. Унта тутлă, пахалăхлă, чи кирли – шăнман тавар туянма май туса памалла», – сĕнет Светлана Григорьевна пенсионер.

«Нумай йывăç, чечек ӳсекен парк кирлĕ пире. Унта тĕрлĕ аттракцион вырнаçтарма май тупчăр», – ыйтаççĕ шкул ачисем.

«Ача садне путевка илме йывăртарах. Çĕннисене хăпартма пуçласса шанатпăр. Çавнашкалах пĕчĕккисене вылямашкăн уйрăм лапам хута ярасчĕ. Кану центрĕ те ытлашши пулмĕ», – калаçăва хутшăнать çамрăк амăшĕ Мария Канаева.

«Пирĕн тăрăхра çĕнĕ йышши çуртсем çĕкленни савăнтарать. Манăн шухăшпа, кинотеатр хăпартмалла. Унта аслисем те, ачасем те хаваспах çӳрĕç», – тет Денис Шубин.

Паллах, кашнин сĕнĕвĕ хаклă. Влаç тилхепине Татьяна Федорова пек пуçлăхсем тытса пырсассăн хулари кашни çын хăйне хăтлă та ирĕклĕ туйĕ.

### Аталану çулĕ

Сăмах май, иртнĕ çулта Нарьян-Мар пуçлăхĕ Татьяна Федорова Мароккăра иртнĕ вырăнти тата регионти лидерсен Пĕтĕм тĕнчери саммитне хутшăннă. Ăна халăхсен хушшинчи «Хуласен тата вырăнти влаçсен пĕрлешĕвĕ» тытăм йĕркеленĕ. Конгресс кашни 3 çулта тĕнчери 3 пин ытла специалиста пуçтарать. Унта 2015 çул хыççăнхи вырăнти влаç тытăмĕн аталанăвĕ çинчен калаçнă. Нарьян-Мар пуçлăхне Татьяна Федоровăна «Хуласен тата вырăнти влаçсен пĕрлешĕвĕ» канашăн членне суйланă. Çак йышри çынсем ятарлă проектсемпе программăсем хатĕрлеççĕ. Çавна кура регионa аталантарма укçа уйăраççĕ. Ку ĕçре пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни те пĕлтерĕшлĕ.

Иртнĕ çул вĕçĕнче Татьяна Федоровăна «Хуласен хушшинчи çыхăнăва аталантарма тӳпе хывнăшăн» медальпе наградăланă.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**



• ВЫРĂНТИ ТРАНСПОРТ.



• НАРЬЯН-МАР ХУЛИ АТАЛАНСАХ ПЫРАТЬ.



*СĂМАХ ПАРĂР-ХА*

# Ĕç шуратмасть, шухăш шуратать

Маргарита ИЛЬИНА

**“Укçапала эрехех тытса тăрать тĕнчене…” – тенĕ класcик. Çак сăмахсен чăнлăхĕ халĕ пушшех те çивĕччĕн янăранăн туйăнать. Ĕлĕкхи халăхсем – ăрусем пĕр сыхăнура-тĕвĕре пурăннă вăхăтрисем – çухалчĕç те паян çамрăк ăрăва воспитани пама та пĕлмелле мар. Мĕн авалтан ачи-пăчине хăй çумĕнче тытнă вĕт-ха чăваш. Утма пуçличчен ĕçе пикеннĕ ахăр хресчен ывăлĕ-хĕрĕ. Аслисем ĕççинче тар юхтарнă вăхăтра ваттисемпе вĕттисем кил таврашĕнчи шăл çемми ĕçсене пурнăçланă. Воспитани ыйтăвĕ тавра çапла хальхи пек пуç çĕмĕрмесĕрех ÿстернĕ шĕвĕрккесене чăваш. Йăлтах хăй тĕллĕн тенĕ пек – ĕç урлă – пулса пынă. Ахальтен мар çакăн пирки калаăш та сахал мар халăхăмăрăн. “Ĕç шуратмасть, шухăш шуратать”, – тенĕ ваттисем. Çакăнтан вирлĕрех тата мĕн калăн?**

**Паян çынсем пĕр-пĕрне енчĕк хулăнăшне кура хаклаççĕ: хулăн-и, темиçе хваттер пур-и санăн – апла эсĕ “çын пулнă”. Çук тăк – каçарăр, эпир сирĕнпе алă та тытмăпăр… Аслă пĕлÿ илни, карьера картлашкипе улăхни – шутра мар. Аслă пĕлÿ хисепрен тухнине ăнланмалла-ха – вĕренÿ тÿлевлĕ пулăшăва çаврăнса кайрĕ те, чăн та, наян çыннăн кăна диплом çук-тăр паян. Карьера ăнăçăвĕ те иккĕлентерет – енчĕк хулăн мар тăк, çÿлерехри тĕнче курăмне шута илсе, мĕн çинчен калаçмалли пултăр?.. /Ак хайхи, чăнах та хваттерсене пÿрне хуçса шутламалли кăна юлать-и-ха капла?/**

**Пĕр пĕлĕшĕмсем, хайхи шухăшпа килĕшÿллĕн, тахçанах “çын пулнă”. Утайи-утайми пепкисем валли чаплă хваттерсем янтă, шăпăрлансене машинăсем туянса панă – çил кастарса ĕрĕхтереççĕ хайхисем “хурçă учĕсемпе”. Ашшĕ-амăшне çакăншăн çĕре çити авăнса пуç таяççĕ тетĕр пуль? Йăнăшатăр. “Вĕсем валли пилĕк авмăпăрха”, – хайсен ĕçĕпе тар кăларакан аслисем пирки сăмах хускалсан сăмсисене каçăртать çамрăк ăру. Вĕсен шайĕ мар-мĕн ку… Шкулта “виççĕрен” пысăкрах паллă сайрахутра кăна илекенсем мĕнле шай пирки калаçаççĕ? Çакна кăна ăнланмастăп. “Тăваттă-пиллĕк” тата дневникра мĕншĕн сахал? Ара, укçаллă çынсен репетиторсем тытма та майĕ ытларах-çке? Мĕншĕн тесен ашшĕ-амăшĕ тĕнче çине çапла пăхать – хваттер илсе панă, машина пур, чаплă тăхăнса çÿреççĕ ачисем, тутлă çиеççĕ – тата мĕн кирлĕ? Ыттине-и? Халĕ пĕтĕмпех туянма пулать…**

**Чăвашăн çак тĕнче курăмĕ çумĕнче нумаях пулмасть паллашма тÿр килнĕ грузинсен шухăшлавĕ пачах аптратса ячĕ. Чăваш Енре çирĕм çула яхăн каялла тĕпленнĕ вĕсем – пиччĕшĕпе шăллĕ. Аслин килтен вун тăваттăра тухса кайнă. Мускав-Шупашкар çула такăрлатнă. Кунта правур пĕр хĕрпе паллашса çемье çавăрнă. Çак пĕр тăвансем çинчен каярахпа тĕплĕнрех çырса кăтартас шухăш пур, халĕ вара пуçланă сăмахăма малалла тăсам. “Ывăлăма каланă: çирĕм çул тĕлне авлансан – санăн йăлтах пулать, – “хирĕçлеме ан та хăйнă пултăр” тенĕ евĕр касать грузин. – Хваттер, уйрăм çурт, хăвăн ĕç. Авланмасан вара…” Мĕн айăпа кĕнĕ-ши капла çамрăкки ашшĕ умĕнче? Çук иккен, пурте чиперех. “Халĕ çамрăксен иртĕхсе кайрĕç, – ăнлантарать вăл хăйĕн çемье “политикине”. – Çырăнмасăрах пĕрле пурăнма пуçлаççĕ те кайран ЗАГС тĕлне мансах каяççĕ. Сирĕн патра кăна мар, Тбилисире те – хулара – халĕ Анăç моди вăй илсе пырать. Юрать-ха пирĕн ялсенче ĕлĕкхиллех таса яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç. Авалхи йăла-йĕрке çирĕп упранать унта. Хальлĕхе… Çавăнпа та ывăлăма çирĕппĕн асăрхаттарса хунă эпĕ”. Çав вăхăтра хайхи каччă çитсе кĕчĕ пÿлĕме. Вун ултă-вун çичĕ çулсенче. Комбинезонпа, алли самай вараланчăк… Ашшĕ вара ывăлĕпе мухтанса илмесĕр чăтаймарĕ: “Курăр манăн алла, унăнне те – ĕçпе хытнă. Укçана йытта шăмă татки ывăтса панă пек памастăп эпĕ ăна – хăй ĕçлесе илет. Акă машинăлăх пухрĕ – виç çĕр пин тенке яхăн. Халĕ модель суйлатпăр-ха. Малтанлăха кивĕреххи те каять…”**

**Пирĕн тăрăхра тĕпленнĕ “хурисем” пирки пит ырласах калаçмастпăр-ха та, хальхинче вара çапах та хисеплес килсе кайрĕ хайхисене. Паллах, ачисене укçа-тенкĕпе мăй таранах тивĕçтерме пултарать çак арçын. Анчах та уншăн тĕп вырăнта – пепкине тĕрĕс воспитани парасси. Хăв ĕçлесе илнĕ çăкăртан тутли те, хакли те çук – çакна ăша хывма вĕрентет вăл ывăлне. Эпир вар, шел, ырă йăла-йĕркене, халăхăмăрта ĕмĕр-ĕмĕр упранса пурăннăскерне, манăçа кăларса пыратпăр.**

*ПАРАЛИМПИАДА*

# Вăйлисене – чи сумлă наградăсем

**Пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче Сочире Паралимп вăййисем старт илчĕç. Уяв XXII Олимпиада пекех Олимп паркĕнчи «Фишт» стадионра уçăлчĕ. Кунта пĕтĕмпе 1 пин ытла артист /вĕсенчен 140-шĕ инвалид/, çавăн пекех 2500 волонтер хутшăнчĕç. 48 хула урлă Раççейри 8 федераци округне çитнĕ çулăма чаплă ларутăрура çутрĕç. Паралимп вăййисен талисманĕсем – Çулăм тата Юр пĕрчи. Раççей ялавне йăтаканĕ – Валерий Редкозубов сăрт-ту йĕлтĕрçи.**

Паралимп вăййисенче 45 çĕршыври 1600 ытла спортсмен медальсен 72 комплекчĕшĕн тупăшать. Вĕсем биатлон, керлинг, сăрт-ту йĕлтĕрçисен спорчĕ, сноуборд, следж-хоккей, йĕлтĕрпе чупас енĕпе вăй виçеççĕ.

Ăмăртусенче пирĕн çĕр-шыв чысне 69 спортсмен хÿтĕлет. Раççей команди малтанхи кунсенчех хăйне аван енчен кăтартма тытăнчĕ, тÿрех темиçе медаль çĕнсе илсе турнир таблицин чи çÿллĕ картлашкине йышăнчĕ. Биатлонçăсемпе йĕлтĕрçĕсем уйрăмах маттур. Пушăн 14-мĕшĕн 13 сехет те 30 минут тĕлне паралимпçăсем 20 ылтăн, 19 кĕмĕл, 15 бронза çĕнсе илме пултарчĕç. Сумлă наградăна тивĕçнисен йышĕнче: Рушан Миннегулов, Роман Петушков,




● РУШАН МИННЕГУЛОВ.



● АННА МИЛЕНИНА.

Кирилл Михайлов, Михалина Лысова, Алена Кауфман, Анна Миленина, Елена Ремизова тата ыттисем.

Юн кун Омскри 19 çулти Григорий Мурыгин йĕлтĕр спринтĕнче кĕмĕл медале тивĕçрĕ. Ытлари кун биатлонра бронза çĕнсе илчĕ. Сăмах май, Григорий 3 çул каялла чукун çул аварийĕнче икĕ урине çухатнă. Александра Францева сăрт-ту йĕлтĕрçисен йышĕнче тупăшса 3 медальлĕ пулчĕ, слалом енĕпе ăмăртса 1-мĕш вырăна тухрĕ. Азат Карачуринпа Владислав Лекомцев биатлонистсем те чемпион ятне тивĕçрĕç.

Шел те, Чăваш Енрен Паралимпиадăна хутшăнакан çук. Спортăн тĕнче класлă мастерĕ Юрий Ильин /Елчĕк тăрăхĕнче çуралса ÿснĕ/ 1994, 1998, 2002 çулсенче хĕллехи Паралимп вăййисенче республика чысне хÿтĕленĕ.

Пирĕн республикăран Паралимп вăййисене пурĕ 81 волонтер кайнă. Вĕсен йышĕнче – Мускав автомобильпе çул-йĕр институчĕн Шупашкарти филиалĕн студенчĕсемпе преподавателĕсем. Çамрăксем траспорт предприятийĕсенче, вокзалсемпе аэропортсенче ĕçлеççĕ. Чăваш Енри 10 тренер йĕлтĕрçĕсемпе биатлонçăсен турнирĕсене иртерме хутшăнать.

**Елена АТАМАНОВА.**

*ТĔРĔСЛЕВ*

# Сирена янăрасан

Пушăн 17-мĕшĕнчен пуçласа 26-мĕшĕччен Раççей МЧСĕн Атăлçи регионĕн центрĕ комплекслă тĕрĕслев иртерет. Унта граждан оборона тытăмне, халăха тата территорисене чрезвычайлă ларутăрура, çынсене шывра путассинчен хÿтĕлессипе, пушар хăрушсăрлăхĕпе мĕнле тивĕçтернине хак парĕç.

Пушăн 19-мĕшĕнче 10.00 сехетре республикăра пурăнакан мĕн пур халăха инкек-синкек вăхăтĕнче хыпарламалли тытăм мĕнле ĕçленине тĕрĕслеççĕ. Çавна май Раççей МЧСĕн Чăваш Енри тĕп управленийĕ асăрхаттарать: электросирена янăранă хушăра ĕçрен, вĕренÿрен пăрăнмалла мар.

**А.ТИМОФЕЕВА.**

*ВĔРЕНÿ*

# Пĕчĕккисене аталантарма

Наци библиотекинче «Интеллектуариум» ача-пăча пÿлĕмĕ уçăлнă. Вăл шкул çулне çитменнисене аталанма пулăшĕ. Ăна «Чăваш Енри çамрăксен ирĕклĕ пĕрлĕхĕ» общество организацийĕн ертÿçисем Михаилпа Галина Павловсем йĕркеленĕ. Вĕсем грант укçипе усă курнă. 286 пин тенкĕпе сĕтелпукан, аталантаракан тетте туяннă. Пĕчĕккисем хăйсене хутлă туйччăр тесе çакăнта пĕр вăхăтра ашшĕамăшĕпе пĕрле 10 пепкене йышăнаççĕ. Çавăнпах ача-пăча пÿлĕмне пырассине Наци библиотекин сайтĕнче маларах палăртмалла.

Вăл куллен, тунти кунпа вырсарни кунсăр пуçне, 10 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ĕçлет.

Чăваш Республикинче çамрăксен пуçарăвне пурнăçа кĕртмешкĕн хулăн укçа уйăраççĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, ку тĕлĕшпе 5751 пин тенкĕ тăкакланă.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

# "Хыпар" çырăнăр – хыпарлă пулăр!

**Хисеплĕ тăвансем, чăвашсем! Халăхăмăрăн тĕп хаçачĕ – "Хыпар" – пĕр ĕмĕр ытла ĕнтĕ пирĕнпе юнашар пурнăç çаврăмне çăмхалать: Раççей, республика кун-çулне çутатать, мухтавлă çыннăмăрсемпе паллаштарать, культура анине илсе кĕрсе чун çимĕçĕпе сăйлать, чăвашлăха упраса та аталантарса пыма хăват парать. "Хыпарăн" пĕрремĕш редакторĕ Николай Васильевич Никольский калашле – хаçат ырра вĕрентет, пурнăçăн паха енĕсем патне çул усать, ăнтăлма хистет.**

Ăнланатпăр: çанталăк ăшăтса пынăçемĕн ял çыннин ĕç нумайланать. Ая вут хунă пек чупкаласа çÿренĕ вăхăтра чун çимĕçĕпе туллин тивĕçтерекен "Хыпарсăр" тăрса ан юлăр. Пĕлетĕр: республикăри кашни почта уйрăмĕнче "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çуррингчен илсе тăмашкăн пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ. Çак тапхăрта çырăнни çемье бюджетне перекетлеме май парать.

Кулленхи "Хыпара" çырăнса илме укçа-тенкĕ çитместех пулсан сире эпир **"Хыпар" – шăмат куна"** суйласа илме сĕнетпĕр. **Вăл чылай йÿнĕрех – 218 тенкĕ те 22 пус çеç.** 16 страницăпа, тĕрлĕ тĕспе пичетленекен кăларăмра сире кирли пĕтĕмпех пур: çĕнĕ хыпарсем, тĕплĕ тишкерÿсем, публицист шухăшĕсем, историе кĕрсе юлнă çынсемпе пулăмсем, паянхипе иртнĕ пурнăç, ятарлă страницăсем, Мускаври хаçатсем мĕн çырнисем, хуçалăхра кирлĕ сĕнÿ-канаш, гороскоп, эрнелĕх теле-, радио программăсем тата ытти те, тата ытти те.

Асра тытăр: "Хыпар" хаçатпа кам туслă, ăна вуласах тăрать – вăл пурнăçра та хăватлă, мал курăмлă.



ÇЫН ТĂК ÇЫН

# Урхамах чунне куçран пăхса туяççĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

«Хам утланмарăм, лаша спорт шкулне çӳрекен пикене шантăм, çамрăксен те ăмăртма хăнăхмалла-çке. Анчах хĕре ăнăçмарĕ çав кун, юлан ут çинчен ӳксе юлчĕ. Юрать-ха ăна аманасран тытса ĕлкĕрчĕç», – каласа пачĕ Петр Васильевич. Çавăн пекех Корифейпе хуçи Хусанти ăмăртăва та çитнĕ. Виçĕ çул каялла арçын 90 килограмм тайнă-мĕн. Ку виçипе лаша утланса ăмăртмашкăн йывăррине палăртать вăл. Хусанти ипподромра чупассишĕнех начарланмашкăн тĕллев лартнă, çулталăкра 20 килограмм чакнă, кăçал 59-а çитесшĕн. Хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тесе вăл куллен чупма тытăннă, кунне пĕр хутчен кăна апатланать.

## Маша

Маша пони кунта çулталăка яхăн пурăнать. Хĕлĕпех Канаш, Комсомольски ачисене çунапа ярăнтарнă, Çăварнире каттаччи те чуптарнă вăл. «Канашра пĕр хĕрарăм сусăр ачипе вĕçĕмех парка пыратчĕ. Пониe ачашлатчĕç,



пылак çимĕçпе хăналатчĕç. Пепки Машăна питĕ курасшăн-мĕн, иккĕшĕ туслашма та ĕлкĕрнĕ», – каласа кăтартрĕ Петр Васильевич.

Ферма хуçи мана та лаша утланса утма сĕнсен, пытармастăп, халĕччен юлан утпа çӳресе курманччĕ те кăштах шиклентĕм. Анчах кун пек май тата хăçан пулĕ-ха? Опытлă тренер пулăшнипе Корифей çине йăпăр-япăр хăпарса лартăм. Лаша кукалеме тапратрĕ. Пĕтрĕмĕр! Ĕрĕхсе каймасть-и ку? Сехетре 70-80 километр хăвăртлăхпа вĕçтерме пултараканскере чарса та пĕтереймĕн... Корифей темиçе утăм тусанах хăрасси иртрĕ, чунра тĕлĕнмелле ăшă туйăм çуралчĕ. Машук та пĕр кутăнлашмасăрах ярăнтарчĕ мана. Пĕчĕкскере йывăр та пулĕ тесе ун çинчен хăвăртах антăм.

## Чун туртăмĕ

Картишĕнче читлĕхре мăшăр кăвакарчăна асăрхарăм, вĕсем те çуркунне çитнĕшĕн савăннă ĕнтĕ. Кăвак тӳпешĕн тунсăхланăскерсем халь-халь ирĕке вĕçсе каяссăн чĕвĕлтетеççĕ. Шурă тĕслисем те, турткăш кăвакарчăнсем, пур Петр Васильевичăн. Вĕсем ăшша юратнăран хальлĕхе çын патĕнче пурăнаççĕ.

Петр Павловăн тĕп профессийĕ – телемаçтăр, йăлари ытти электрохатĕр вансан та çийĕнчех ун патне пыраççĕ çынсем. Ĕçне кура ун çумне хушма ят та çыпçăннă: «НТВ Петти» тесен таврара ăна пурте пĕлеççĕ. Анчах юлашки вăхăтра вăл лаша спортне аталантарассине пуçĕпех парăннă тесен те йăнăш мар. «Ку шухăшпа миçе çул ĕнтĕ каç выртса ир тăман-ши? Тинех пиççе çитрĕм пулĕ», – уçăмлатать чун туртăмĕ пирки арçын. Акăлчансен таса йăхĕнчи утланса çӳремелли лаша республикăра никамăн та çук-мĕн. Элита шутланакан ăратлă урхамах туянакан чăваш хушшинче те тупăннине курсан тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ Хусанта. Лашасемпе Петр Васильевич Раççей, тĕнче шайĕнчи ăмăртусене хутшăнма ĕмĕтлент, çамрăксене те спортăн çак тĕсĕпе туслаштарма хатĕр вăл. Тренер та тупнă. Тутар каччипе Искандерпа вăл Хусанти ипподромра паллашнă. Яш юлташне пулăшма шăпах фермăна килнĕччĕ. Искандер – лаша пăхакансен йăхĕнчен. «Выльăх чунне куçран пăхсах туять», – тет ун пирки Петр. Иккĕшĕ кĕçнерни кун ут туянма Хусана кайма палăртнă. Материала пичете хатĕрленĕ вăхăтра Петр Павловпа телефонпа çыхăнтăмăр. Вăл хăйĕн хуçалăхне ăратлă тепĕр икĕ лашапа пуянлатнине пĕлтерчĕ.

## Лаша спорчĕпе туризма аталантарма

Кăçал Республика кунĕ Каçал енче иртет. Уявра лашапа чупассипе те ăмăрту йĕркелĕç. Комсомольски район администрацийĕ фермер пуçарăвне ырласа грант конкурсне хутшăнма сĕннĕ. Петр Васильевич бизнес-план хатĕрленĕ те ĕнтĕ. Петр Павловăн проекчĕ районти туризм аталанăвĕшĕн те пĕлтерĕшлĕ. Чăнах та, çакнашкал пысăк ĕçе пулăшусăр пурнăçа кĕртме йывăр. Туристсене илĕртмешкĕн зоопарк та йĕркелесшĕн. Хамăр тăрăхри чĕр чунсемсĕр пуçне тĕве, страус та илсе килесшĕн, картишĕнчи пĕр кĕтесе чăвашăн авалхи историне халалласшăн вăл.

Петр Васильевич историпе тахçантанпах кăсăкланать. «Каховский ăсчах пирĕн эрăчченхи 2 пин çул каялла Каçал тăрăхĕнче металлурги вăйлă аталаннине çирĕплетнĕ. Карьер вырăнĕсем халĕ мăн асатте-асанне халапĕнчи Улăп тăприне çаврăннă ĕнтĕ. Кунта тимĕр, пăхăр кăларнă. Мĕн авалтан чăваш пуян халăх шутланнă. Археологсем кунта çĕрсене нумай тĕпченĕ. Çар çыннин сăнă вĕçне эпĕ те курнă, вăл халĕ шанчăклă çĕрте упранать. «Чăваш картишĕ» йĕркелесен ăна экспонат вырăнне кăларса хурăп, çавăнтах ĕлĕкхи çар çынни мĕнле пулнине те кăтартăп. Пирĕн йăх-несĕл çĕр ĕçĕпе, выльăх чĕрлĕх ĕрчетессипе кăна мар, вăрçăра паттăр çапăçнипе те палăрнă. Хамăр йăх тымарне пĕлни ытти халăх умĕнче мĕскĕнленме памасть», – палăртать мал ĕмĕтлĕскер.

Шухăш-ĕмĕтне пурнăçа кĕртме ырă сунса сыв пуллашрăм Каçал маттур арçыннипе.

**Алина ИЗМАН.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**●«ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔН» КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ЙĂЛТ ХĂЙ ТĔРĔСЛЕСЕ ПĂХМА ХĂНĂХНĂ.**

ХĔРЕСТИН ПĂТĂРМАХĔСЕМ

# Хамăрьял

Çӳçе кăтралатса, юбкăна çӳлерех туртса çӳреме пуçларăм – ара, çуркунне çитнĕпе пĕрех-иç! Чăн та, календарьпе килĕшӳллĕн, урамра çур уйăха яхăн хĕвел "шартарса пăхать". Анчах лĕпĕшсем вăранса тухман-ха... Апла, çуркунне çитсех кайман. Чĕре çеç теме сиснĕн хăвăртрах та хытăрах кăртлатса тапать.

Çуркунни юрĕ-ха, çитмесĕр юлас çук. Хырăм выçăпа чăрлатать, çав нуша пĕтерет. Ĕне çиллинчен сăрхăнса тухакан сĕтĕн пĕрремĕш тумламĕсем пушă витре тĕпне лексе чăлпар сирпĕннĕ пек хăнкăртатать тепĕр чух хырăмлăхăм. Эпĕ мĕн те пулин каласа кăшт лăплантарсан /сăмахран, "чăт ĕнтĕ ыранччен"/ витре тулса пынă май сĕт юхăмĕ чăрлатнă пек калаçать: чăр-р-р, чăр-р-р!.. Анчах та пач шăпланма шухăшламасть те мур...

Ара, хам чĕлхене пула пĕр ĕçре те тытăнса тăраймастăп мар-и? Мĕн курнине калаймасăр чăтаймастăп та... Калăпăр, пĕр пуçлăхăн ури кукăр, теприн – алли. Çакна каламасăр ăçтан чăтăн вара? Пурне те каласа çӳреместĕп-ха ĕнтĕ, шаннă çынсене кăна. Анчах манăн шаннă çыннăн хăйĕн те тусĕ пур вĕт-ха. Ка-айрĕ вара чĕлхерен пĕр вĕçерĕннĕ сăмах. Пĕрин арăмĕсĕр пуçне савнийĕ те пур, çитменнине виççĕшĕ те пĕрлех ĕçлеççĕ, теприн вара вăл та, ку та çук... Каллех маншăн чĕлхе хыçмалли сăлтав. Пуçлăхсем хăйсем çинчен хăйсем те ман чухлĕ пĕлмеççĕ-тĕр!

Кантуртан кантура ута-ута ывăнтăм. Мана, пĕлĕвĕме кура, унти якалса-çуталса кайнă сĕтел хушшинчи ваканси кĕтместха ĕнтĕ. Анчах та "урай çусан та – кантурта" девизпа пурăнатăп эпĕ. Пенси килет, ун çумне пĕр 10 пин тенкĕ хушăнсан аптăрамăттăмччĕ-ха та... Урай çунăшăн ун чухлĕ кам тӳлет тесшĕн-и? Эй, майне-шуне пĕлес пулать çав. Урая ăçта çăвасси питĕ пĕлтерĕшлĕ. Юрĕ, хамăн вăрттăнлăхсене сире уçса памашкăн тĕв туман-ха эпĕ паян. Арçынсем пит тĕлĕнтернипе шухăшăма хут çине куçармашкăн алла калем тытрăм.

Каларăм ĕнтĕ, эпĕ пит аптрасах тăраканнисен йышĕнчен мар. Алăкран тапса кăларса ярсан чӳречеренех кĕрейместĕп те, çапах та тепĕр çичĕ çĕре çитсе шаккатăпах. Кам та пулин пур пĕр уçать. Пĕрер уйăх çапах та тытăнса тăратăп эпĕ унта – пур вăрттăнлăха пĕлсе çитиччен. Алăкне пули-пулмине пырса шаккамастăп та – уйăхра та йĕркеллех ĕçлесе илетĕп. Пĕчĕккĕн пухăнать вара çапах та... Пушшех те – апат кашни кун çимесен...

Вăт хайхи çапла хĕстерсе пухса кил-çурт таврашне кăшт юсакаланçи турăм – хапхана сăрларăм, чалăшнă картана тӳрлеттертĕм, чӳречене кантăк ларттартăм /çутă хут кăна карса янăччĕ унччен/, пӳрт тăрринчи шăтса пĕтнĕ шифера та хальхи йышшипе улăштартăм. Савăнса çитерейместĕп, хам çурта хам палламастăп вĕт! Шалта унта хăть урайне кивĕ пальто пăрахса çывăрам – тул енчен çынна ĕретлĕ курăнать. Хапхана вара халĕ çирĕп тĕкĕлесе пурăнатăп – ăнсăртран-мĕнрен кам та пулин кĕрсе ан куртăр тетĕп-çке.

Вăт хайхи эпĕ çапла "алăура çавăрса янине" манăн малтанхи савни такамран илтнĕ – çураçма пычĕ хайхи. Хăйне арăмĕ килтен кăларса янине пĕлетĕп-ха, ухмаха петĕм ĕнтĕ, шарламарăм /кур-ха, кирлĕ чухне манăн та чĕлхе шăл хушшине хĕсĕнет иккен!/. Темĕн те каласа мухтанчĕ ăш çунтармăш. Кил-çурчĕ унăн улпутăнни пек иккен, картишĕнче хурçă темиçе урхамах кĕçенсе тăрать. Уйра – гектарĕ-гектарĕпе çĕр, выльăх-чĕрлĕхĕ – ĕлĕк колхоз ферминче ун чухлĕ пулман... Мана мĕншĕн çураçать-ши вара ку? Э-э-э, арăмĕпе иккĕшĕн хушшинче юрату сӳннĕ-мĕн, халĕ çак пурлăха йăлтах мăшăрне парса хăварать те эпĕ йышăнсан ман пата пурăнма куçса килет... "Эх, – лаштах сывлать савни. – Тӳрех сана качча илмеллеччĕ манăн... Вăт пурнăç тăваттăмăр санпа иксĕмĕр..." "Аха, – шухăшлатăп эпĕ, – манăн ĕнсе çинче шăпах сан валли вырăн юлнă. Атя, хăпарса вырнаç та уруна усса суллакаласа лар... Эпĕ вара пенси укçипе хĕрĕме савăнтарас вырăнне сана аллă грамм ярса парса ларам... Кашни пилĕк минутра..." Сасăпа вара... çăва тĕпĕнчен те аяккарах ăсатрăм хайхине. Кур-ха ăна, эпĕ ыран-паян месерле яла кайма хатĕрленсе çи-пуç хатĕрлесе хутăм ĕнер арча тĕпне, вăл вара çаплах тем шухăшĕсемпе аташса çӳрет. Кил-çуртăма шала кĕрсе курсан хăранипе чĕри çурăлса каясран хăраса хайхине кĕрсе чей ĕçмешкĕн те сĕнмерĕм. Шухăшласа çӳретĕриç "эх, мĕнле карчăка çухатрăм!" тесе.

Тем чухлĕ перекетлесен те саплăк çине саплăк лартса çитерееc çук. Резина аттăм шăтса пĕтсе çăпатана çаврăнчĕ ĕнтĕ. Капла пулмасть, пасара кайса çаврăнсах килес пулать. Эй, амутке, тĕнчен ку кĕтесне тахçанах çитсе курманччĕ те – шалт тĕлĕнтĕм! Мĕнле кăна атă çук! Çӳллĕ кĕлелли, чечекли, тĕрлĕ тĕсли! Хăшне-пĕрне çывăхран пăхмасан сăранран тунă теме те пулать. Пĕр арçын тем тунсăха пусса пуçне чикнĕ те – таварĕ пачах сутăнмасть курăнать – çавăнтан туянам-ха тесе ун патне çывхартăм. Ак тамаша! Хамăр ял тепĕр вĕçĕнчи Ваççа пулчĕ кайрĕ. Илтнĕччĕ-ха пасарта атă-пушмак сутать тенине. Пасар халăхĕ пуян пулакан та, тен, хамăр ял тесе, чакарса та парĕ-ха. Мана курсан хайхи кăмака анинчи сар çу пек ирĕлме пуçларĕ. Тӳрех ăнлантăм – эпĕ "ура çине тăнă" хыпар ял тепĕр вĕçне те çитнĕ. Сăмаха тăкать те тăкать – чăх сăхса çитерееc çук. Пĕлтерĕшĕ вара пĕрре – ăшă вырăн кирлĕ хайхине. Кушак пек çăмхаланса-чăмăртанса пĕр-пĕр çĕтĕк кавир çинче алăк патĕнче те çывăрма пултарать, пĕрре те чăрмантармĕ, апат та пĕçерсе çитерĕ, урай та çăвĕ, пĕр сăмахпа, нимĕнле ĕçе те тиркемĕ – йышăн кăна. Эпĕ ĕнтĕ килĕшме те, хирĕçлеме те аптăратăп: атă туянмалла вĕт-ха манăн. Эпĕ ырă та, усал та чĕнменнине кура хайхи урăхларах калаçма пуçларĕ. Сăн-пичĕ пуш уйăхĕнчи кушак аçин пек ялкăшать, чĕлхинчен кăрлач хаяр сивви çапать. Ман куç çӳлĕксем çинчи атăсенех хыпашлать-ха. Чăн та, суйламалăх таварĕ те çук мăнтарăнăн... Вилме маннă карчăкăн çăварĕнчи катăк шăл пек унта та кунта кăнтарса тăрать темиçе мăшăр. "Хăй хакĕпех, хăй хакĕпех паратăп, ара, эсĕ ентеш вĕт, – "чĕвĕлтетет" хамăрьял. – Ăшă вырăн пирки те, тен, шухăшласа пăхăн çапах та?" Чĕвĕлтете-чĕвĕлтетех хайхи темиçе нульлĕ хак çавăрса хучĕ. Чутах кутăн кайса ларттăм. Эпĕ выçăпа каçăхнине пула хӳрине пĕтĕрнĕ пек кăшкăракан качакама та Трахви карчăккине ку хакран самай йӳнĕрехпе сутнăччĕ... Атă çапах та качака мар вĕт-ха.

Халĕ алла блокнотпа калем тытса ял тăрăх утатăп-ха, хĕрарăм шучĕпе пурăнакан арçынсен списокне хатĕрлес тетĕп. Ара, пачах аташса кайрĕç мурсем. Хĕрарăма юратас, ăна тăрантарас-тумлантарас, парне айне тăвас вырăнне ун çумĕнче ăшă вырăн шыракан арçынсем сирĕн ялта та пур-и? Апла чĕнĕр кăна, сирĕн пата та вĕçтерсе çитĕп. "Хура" çак списока, пуçлăх ирĕк парсан, юратнă "Чăваш хĕрарăмĕнче" пичетлесе кăларас шухăш пур-ха... Тен, хăшне те пулин намăс пулĕ-и?..

**Шалт тĕлĕннĕ ХĔРЕСТИН.**

ЙĔРКЕСĔРЛĔХ

# Голливуд сюжечĕ тейĕн...



Нарăсăн 21-мĕшĕнче Вăрмар район сучĕ Тăвай районĕнче пурăнакан 41 çулти Тамара Иванова тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçе пăхса тухнă. Ăна влаç представительне хĕненĕшĕн айăпланă.

Пĕлтĕрхи юпа уйăхĕнче касçи пилĕк сехет тĕлĕнче полицин дежурнăй чаçне кӳршĕсем çапăçса кайни пирки шăнкăравласа пĕлтернĕ. Чĕннĕ çĕре следстви тата оперушкăн çитнĕ. Шар курнă хĕрарăм хăйне кӳрши хулăпа хĕненине пĕлтернĕ, çакăншăн айăплине явап тыттарма ыйтнă.

Ĕç-пуçа тĕпчемешкĕн полици сотрудникĕсенчен пĕри Тамара Ивановăн çурчĕ патне пынă. Алăка хĕрарăмăн шăллĕ тӳрех уçнă, йĕрке хуралçине кĕме ыйтнă. Çак самантра тимĕр кĕреçине çӳлелле çĕклесе Иванова хăй чупса тухнă та аллинчи ĕç хатĕрне форма тăхăннă арçын çине сулса янă. Полицейски сулахай аллипе хӳтĕленме мĕнле ĕлкĕрнĕ-ши? Унсăрăн кĕреçе пуçрахых пырса тивĕччĕ. Хулне кăвакартнăскер кил картинчен тухса тарнă, влаç представительне тапăнаканран хĕç-пăшалпа хӳтĕленме ирĕк пурри çинчен асăрхаттарнă. Хĕрарăм çакăн хыççăн та чарăнман-ха, пуртă ярса илнĕ, вĕлерессипе хăратса полицейски хыççăн ыткăннă. Юрать-ха шăллĕ хапхана хупма ĕлкĕрнĕ.

Следстви вăхăтĕнче Иванова айăпне йăлтах йышăнман. «Полицейски хăй мана çухаран ярса илчĕ, урама сĕтĕрсе тухма хăтланчĕ. Çавăн чухне тин кĕреçе тытрăм, ăна ăнсăртран лектертĕм», – тӳрре тухма тăрăшнă вăл, пуртăпа вĕлерессипе хăратнине пачах та хирĕçленĕ.

Судра та хĕрарăм хăйĕннех пенĕ, çав вăхăтрах уголовлă ĕçе амнистипе усă курса чарма ыйту çырнă. Анчах та влаç представительне хирĕç преступлени тăвакан тĕлĕшпе саккун çирĕп, хальхинче те Ивановăн çул çитмен ача пуррине те пăхса тăман, хĕрарăма айăплă тесе йышăннă, 20 пин тенкĕлĕх штрафланă.

**Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай район прокурорĕ.**

ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИ



# Пуйăс килнине курсах...

**ЧР ШĔМĕн ÇÇХПИ управленийĕн черетлĕ пресс-конференцийĕ Чул хула чукун çулĕн пуçарăвĕпе иртрĕ. Унăн ертӳçин çумĕ, Хусанти управленийĕн пуçлăхĕ Александр Черемнов каланă тăрăх – вĕсем пăхса тăракан çул Раççейĕн 5 субъекчĕпе иртет. Ун урлă каçмалли вырăн – 207, вăл шутра 59-ăшĕ – Чăваш республикинче, вĕсенчен 4-шне çеç дежурнăйсем пăхса тăраççĕ.**

Çул-йĕрти хăрушлăха сирес тĕллевпе ÇÇХПИ сотрудникĕсемпе пĕрле çул-йĕр ĕçченĕсем рейд, комисси тĕрĕслевĕ, транспорт тытса тăракан предприятисенче, автошкулсенче тĕл пулусем ирттереççĕ, тĕрлĕ акци йĕркелеççĕ. Çапах та чукун çул урлă каçмалли вырăнта пĕлтĕр 3 инкеке шута илнĕ. Çĕрпӳре – автомашина хуçи светофор хĕрлĕ çутăпа ялкăшнине пăхса тăман, чукун çул урлă каçса кайнă. Икĕ уйăх маларах кăна-ха водителе йĕркене шăп çакнашкал пăснăшăн асăрхаттарнă. Кун пек урăх хăтланмасса шантарса алă пуснă транспорт хуçи. Хальхинче тӳрре тухма тăрăшса: «Сарă çутă мĕлтлететчĕ...» – теме пăхнă малтанах арçын, чукун çул светофорĕн кун пек тĕс пачах çуккине те пĕлмен-ши? «Инкек сăлтавĕ – тимсĕрлĕх, çул çинчи паллăсене асăрхаманни», – палăртрĕ ÇÇХПИ управленийĕн ертӳçин çумĕ Олег Федоров.

Кăçалхи кăрлач уйăхĕнче Ишлей станцийĕ тĕлĕнче локомотив шăхăртса килнĕ вăхăтрах машина çул урлă каçма тăнă. Юрать-ха, водитель чĕрĕ юлнă, çăмăл машина вара хытах сиенленнĕ. Чукун çулпа тăтăшах хими промышленноçĕн, çунтармалли-сĕрмелли тиеве турттарнине тата пассажир пуйăсĕ вĕçĕмех иртсе çӳренине шута илсен инкек хăрушăрах та вĕçленме пултарнă-çке. Чукун çул çинче автотранспортпа çыхăннă инкек, сиен йывăрăшне кура, пысăккисен йышне кĕрет. Айăплине 5 пин тенкĕ штраф тӳлеттереççĕ е водитель правинчен хăтараççĕ.

– Хальлĕхе фото-видеофиксаци хатĕрĕ 1 çĕрте, Шупашкар-Çĕнĕ Шупашкар çулăн 2-мĕш километрĕнче кăна ĕçлет, урлă каçмалли ятарлă 6 вырăнта фото ӳкерекен приборсем вырнаçтарнă. Фотоматериал ÇÇХПИ управленине килсенех йĕркене пăсакансене явап тыттарассипе ĕçлеме тытăнатпăр. Приборсем ĕçлекен çĕрте водительсем йĕркене çирĕп пăхăнаççĕ, – уçăмлатрĕ Олег Федоров. ЧР транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕн çумĕ Владимир Степанов каланă тăрăх – час-часах инкек пулакан тĕлте çула пӳлекен хатĕр те вырнаçтарма палăртаççĕ, «аслă» хатĕрсене те ытларах хута ярĕç.

Журналистсене чукун çул вокзалĕнчи хăрушсăрлăх ыйтăвĕ те кăсăклантарчĕ. Пĕлтĕр çулталăк вĕçĕнче Волгоградра пулса иртнĕ теракт сисчĕвлĕх пирки самант та манма хушмасть.

– Хăрушсăрлăх служби мĕнле ĕçленине пĕлмешкĕн ятарласа Шупашкарти чукун çул вокзалне пысăк сумкăпа пырса кĕтĕм. Ăна йĕркеллĕн тĕрĕслемерĕç те, ирĕклĕнех кĕрсе кайрăм. Усал шухăшлă çын пулас тăк хамăн хура ĕçе тума нимĕн те чăрмантармĕччĕ мана, – каласа кăтартрĕ пичет кăларăмĕн корреспонденчĕ.

– Кашни çынна тĕрĕслеме май та çук, çапах та иккĕленӳ çуратакансене ахаль ирттерсе ямаççĕ. Кăрлачăн 20-мĕшĕнчен çĕнĕ хушу тухрĕ. Унпа килĕшӳллĕн вокзал ĕçченĕсен те пассажирсен сумккине пăхма ирĕк пур. Ӳлĕмрен тĕрĕслев те çирĕпрех пулĕ, – терĕ Александр Черемнов.

Пичет кунĕ умĕн ĕçтешсемпе ыйтăм ирттермешкĕн чукун çул вокзалне пырса кĕни аса килчĕ. Эпир пысăк кутамккапа марччĕ, паллах, анчах хăрушсăрлăх службин икĕ ĕçченĕ пире тĕрĕслемесĕр малалла кĕме ирĕк памарĕ. Е эпир иккĕленӳ çуратакан çын евĕр туйăнтăмăр-ши?

**Алина ИЗМАН.**

ХĂРУШСĂРЛĂХ

# Инкеке асăрхаттарма пĕлмелле

**Нарăсăн 6-мĕшĕнче 11 сехетре ку тăрăхра пулса иртнĕ инкек республикăна кисретрĕ. Хурама Тăвар ялĕнчи йывăç çуртра инкеклĕ çав кун пушар сиксе тухнă. Ашшĕ-амăшĕ кӳршĕ ялта пулнă. Синкерте 4 тата 2 çулти ачасен пурнăçĕ татăлнă.**

Нарăсăн 13-мĕшĕнче Турханта ял тăрăхĕн профилактика канашĕн тата районти профилактика комиссийĕн пĕрлехи канашлăвĕ иртнĕ. Унта Турхан ял тăрăхĕн активĕ те хутшăннă. Канашлура ял администрацийĕн, вырăнти депутатсен тата йывăр лару-тăрулă çемьесене сăнакан канаш ĕçне пăхса тухнă.

Чăваш Енри ача прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйĕн Патăрьелĕнчи представителĕ Дильбер Гайнуллина палăртнă тăрăх, республикăра çулталăка çитмесĕрех пурнăçран уйрăлакан кашни тăваттăмĕш ачан вилĕмĕшĕн ашшĕ-амăшĕ айăплă – асăрхаса çитереймен. Çакăн пек лару-тăрăва лекнĕ пур çемье те "йывăррисен" шутĕнче мар. Çакă сисчĕвлентерет те. Хурама Тăвар ялĕнчи мăшăр пирки те япăххине калаймăн.

Çакă та пăшăрхантарать – кӳршисем е тăванĕсем тимлĕрех пулнă тăк нумай инкеке сирме май пулĕччĕ.

Дильбер Зардынобна кăткăс лару-тăрулă çемьесене уйрăмах куçран вĕçертмелле маррине тепĕр хут аса илтернĕ. Профилактика малта пулмалла. Депутатсен, Хĕрарăмсен канашĕн, сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсен, шкул çулне çитменнисен тата вĕренӳ ытти учрежденийĕсен пĕрле тимлемелле.

Пухăннисем профилактика енĕпе ытларах ĕçлемеллине палăртнă. Инкек сиксе тухсан мĕнле тыткаламалли пирки те çынсене тăтăшах аса илтермелле. Йывăр лару-тăрăва лекнĕ çемьесене тата ашшĕ-амăшĕн е опекун тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçламанниsене вара тĕрĕслесех тăмалла.

**М.МИХАЙЛОВА.**

КИРЕВСĔРЛĔХ

# Ачана хĕненĕшĕн

**Элĕк район прокуратури 1974 çулта çуралнă арçын тĕлĕшĕпе уголовлă ĕç пуçармашкăн материалсене тĕпчеме тивĕçлĕ çĕре ярса памашкăн йышăну кăларнă. Арçынна тăван мар ачине тăтăшах хĕненĕшĕн явап тыттарасшăн.**

Чăваш Сурăмĕнчи А.Никитин Н.-па 6 çул çырăнмасăрах пурăннă. Хĕрарăм иккĕмĕш ачине унран çуратнă. Анчах аслипе, тăван мар хĕрĕпе, арçын темшĕн пĕр чĕлхе тупайман. Çапла пĕлтĕр кĕркунне амăшĕ килте çук чухне 10-ри хĕр пĕрчине хĕненĕ. Урайĕнче ларакан ачана майăран ярса илнĕ те пуçĕпе çĕрелле çапăнтарнă ӳсĕрскер. Кăçал нарăс уйăхĕнче те хĕр ачана каллех унтан патак лекнĕ: пуçран, çурăмран, купарчаран çапнă. Нарăсăн 10-мĕшĕнче чунсăр этем икĕ пепкине те, вĕсен вăтă та куçĕ курман кукашшĕне те килĕнчен хăваласа кăларса янă. Кĕçĕнни, тăваттăри хĕр пĕрчи, шартламара çарамасах урама тухса тăнă: хулăн çи-пуçне тăхăнса та ĕлкĕреймен. Çемьен ют çынсем патĕнче хӳтлĕх шырама тивнĕ. Тепĕр кун та лăпланман чун илли. Мăшăрне те, ачисене те киле кĕртмен.

Шар куракан хĕрарăм ăнлантарнă тăрăх – арçын çур çула яхăн ĕнтĕ урăлса курмасть, ниçта та ĕçлемест, укçа-тенкĕпе çемьене пулăшмасть. Ачисем умĕнчех ăна вĕлерессипе хăратать. Тĕпренчĕкĕсем вĕçĕмех хăраса пурăнаççĕ.

Уголовлă ĕç пуçарас ыйтăва ЧР прокуратури çумĕнчи Етĕрнери районсен хушшинчи следстви уйрămĕ татса парать.

**Эдуард ТЕКЛЕВ,**
**Элĕк район прокурорĕ.**

ХӲТЛĔХ

# Йĕркене пăхăнмасан

Сусăр ачасем хушма пĕлӳ паракан учрежденисене чăрмавсăрах кĕрсе тухма пултараççĕ-и? Çакна прокуратура районти халăха социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерекен пай ĕçченĕсемпе пĕрле тĕрĕсленĕ. Социаллă инфратытăм учрежденийĕсене пандуспа, карлăкпа тивĕçтерессине федерацин чылай саккунĕнче палăртнă. Çакна районти ача-пăча пултарулăх çуртĕ пурнăçа кĕртмен. Çакăншăн ертӳçĕ тĕлĕшпе административлă явап хунă, учреждение кирлĕ хатĕрпе тивĕçтерме ыйтнă. Айăплисем çитменлĕхе сийĕнчех пĕтернĕ.

Районти халăха социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерекен пай хăй те саккуна пăснă: «хĕрӳ» вырăнсенче çапăçнă ветерансен коммуналлă тăкаксен пĕр пайне саплаштарма хирĕçленĕ. «Ветерансем çинчен калакан саккунпа килĕшӳллĕн пурăнмалли çурт-йĕр тăкакĕсен 50%, вăл шутра çемьере пурăнакансемшĕн те, саплаштармалла. «Вăл хăйĕн çуртĕнче пурăнать-çке», – хирĕçленĕ соцĕçченсем. Ĕç-пуçа тĕрĕсленĕ хыççăн Шупашкарти Ленин район судне тавăç тăратнă.

Прокуратура ĕçченĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен харпăрлăхĕнчи çурт-йĕр фончĕпе епле усă курнине те тĕрĕсленĕ. Сĕнтĕрвăрри хула администрацийĕ муниципалитет службипе пач çыхăнман çынсене пурăнмалли кĕтеспе тивĕçтернине тупса палăртнă. Администраци пуçлăхне саккуна пăснă тĕслĕхсене пĕтерме хушнă, икĕ çынна явап тыттарнă.

**А.КАЮКОВ,**
**Сĕнтĕрвăрри район прокурорĕн аслă пулăшуçи.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Çĕр улмипе ыхра салачĕ

**1 килограмм çĕр улми, пуçлă 1 сухан, 1 шăл ыхра, тăвар, укроп кирлĕ.**

Çĕр улмине пĕçермелле, хуппинчен тасатмалла. Çĕр улмине, сухана, ыхрана, укропа вĕттĕн турамалла. Çимĕçсене пăтратмалла, тăварпа пăрăç сапмалла. Салата симĕс пăрçапа илемлетме пулать.

### Купăстапа, лимонпа

**1 пуç купăста, 1 кишĕр, 1 пан улми, 0,5 лимон, тăвар кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă купăстана тăварпа пăтратмалла. Теркăланă кишĕрпе пан улми, лимон сĕткенĕ хушмалла. Салата тип çупа пăтратмалла, лимон касăкĕсемпе илемлетмелле.



### Сельдь паштечĕ

**1 сельдь пуçне 2 апат кашăкĕ тип çу, 1 пан улми, 2 шăл ыхра, укроп кирлĕ.**

Шăмминчен тасатнă пулла вĕттĕн тураса ала витĕр кăлармалла, тип çупа пăтратмалла. Вĕтетнĕ ыхра, теркăланă пан улми хушмалла. Сельдь паштетне ăшаланă çăкăр татăкĕ çине хурса памалла.

### Хĕрлĕ кăшман вăлчи

**Пуçлă 1 сухан, 1 кишĕр, 4 хĕрлĕ кăшман, 100 грамм тип çу, 100 грамм томат нимĕрĕ, тăвар кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă суханпа теркăланă кишĕре тип çупа ăшаламалла, теркăланă хĕрлĕ кăшман хушмалла, вăйсăр çулăм çинче пăшăхламалла. Пиçес умĕн тăварпа томат нимĕрĕ хушмалла.

### Шалча пăрçи яшки

**1 стакан шалча пăрçи, 7 çĕр улми, 1 кишĕр, пуçлă 1 сухан, 3 шăл ыхра, 3 апат кашăкĕ тип çу кирлĕ.**

Шалча пăрçине шÿтермелле, çав шыврах пĕçермелле. Яшкана тăвар, вĕттĕн туранă çĕр улми, ăшаланă кишĕрпе сухан ямалла. Çулăма сÿнтериччен вĕтетнĕ ыхра, тип çу хушмалла.

### Сухан кукăлĕ

**150 миллилитр сĕт, 250 грамм маргарин, 2 чей кашăкĕ сахăр, 3 стакан çăнăх, тăвар кирлĕ.**

**Ăшне хума пуçлă 3 сухан, 2 çăмарта, 100 грамм хăйма, 50 грамм майонез хатĕрлемелле.**

Ăшă сĕтпе, ирĕлтернĕ маргаринпа, сахăрпа, тăварпа, çăнăхпа чуста çăрмалла. Ăна çу сĕрнĕ çатмана хумалла, айккине хăпартмалла. Ун çине ăшаласа сивĕтнĕ сухан сармалла. Ăна пăтратса кăпăклантарнă çăмарта, хăйма, майонез хутăшĕпе витмелле. Сухан кукăльне духовкăра 35-40 минут пĕçермелле.

### Çăкăрти какай

**Çавракă çăкăр, 700 грамм сысна какайĕ, 3 апат кашăкĕ çăнăх, 1 стакан сĕт, пуçлă 1 сухан, 70 грамм услам çу, 50 грамм сыр, тăвар кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă сухана тип çупа ăшаламалла, тăваткалласа каснă какай хушмалла, 20 минут пăшăхламалла. Тăвар сапмалла.

Услам çăва ирĕлтермелле, çăнăхпа пăтратмалла, сĕт ямалла. Çак соуса какайпа сухан хутăшĕпе пăтратмалла, 5 минут пăшăхламалла.

Çăкăрăн çÿлти пайне касмалла, ăшне кăлармалла, ун вырăнне соусри какай тултармалла. Çиеле теркăланă сыр сапмалла. Çăкăрти какая духовкăра 20 минут пĕçермелле.

### «Çурхи чечек çыххи» салат

**Консервланă 1 банка горбуша, пуçлă 3 сухан, 1 кишĕр, пĕçернĕ 300 грамм рис, 1 хăяр, салат çулçи, майонез, тăвар кирлĕ.**

***Илемлетмешкĕн:* пĕçернĕ 4 çăмарта, хĕрлĕ кăшман сĕткенĕ, укроп кирлĕ.**

Теркăланă кишĕре ăшаламалла. Суханпа хăяра вĕттĕн турамалла. Салат çулçине алăпа вĕтетмелле. Салата сийлесе /салат – рис – горбуша – сухан – кишĕр – хăяр/ хумалла.

Çăмарта саррипе шуррине уйăрăмăн теркăламалла. Çăмарта шуррин пĕр пайне хĕрлĕ кăшман сĕткенĕпе сăрламалла. Çак çимĕçсемпе салата илемлетмелле: тĕрлĕ чечек тумалла, тунипе çулçи вырăнне укроп хумалла.

### Сыр çаврашки

**500 грамм сыр, 3-4 çăмарта, тăварпа пăрăç, 2-3 апат кашăкĕ çăнăх кирлĕ.**

Теркăланă сыра çăнăхпа, çăмартапа пăтратмалла. Çак хутăшран çаврашкасем тумалла, çăнăхпа йăвалламалла. Вĕсене тип çупа ăшаламалла.

### Сырпа çĕр улми хăпартăвĕ

**100 грамм сыр пуçне 60 грамм сухан, 60 грамм хăйма, 300 грамм çĕр улми, 40 грамм тип çу, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Теркăланă сыра тип çупа, хăймапа, тăварпа, пăрăçпа хутăштармалла. Теркăланă çĕр улмине сыр хутăшĕпе, вĕтетнĕ суханпа пăтратмалла. Сырпа çĕр улми хăпартăвне духовкăра 1 сехет пĕçермелле.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ



## Пĕтĕ чухне

**Качака кĕçех пăранламалла. Ăна шĕвĕрĕлченрен укол тума юрать-и халĕ?**

**Г.ВАСИЛЬЕВ.**

Вырăнти пĕтĕ чухне укол тума та, эмел пама та тăхтамалла, уйрăмах юлашки тапхăрта асăрханмалла. Пăранланă хыççăн тин сиплеме тытăнмалла, тепĕр икĕ эрнерен тепĕр хутчен укол тумалла. Шĕвĕрĕлченрен «Альбена» таблетка та пулăшать, анчах препарат виçи ытлашши лексен шăнăр туртас хăрушлăх пур, çавăнпа качакан йывăрăшне шута илмелле. Амăшĕпе пĕрле путеккисене те сиплемелле, эмеле виçине пăхăнса памалла. Хальлĕхе вара выльăха виçĕ кун пĕрер ывăç сухан хуппи çитерме юрать.

* * *

Качака сĕчĕ часах кĕвĕлмест. Çак ĕçе епле хăвăртлатмалла-ши? Малтан савăта тăпăрч шывĕпе çумалла, тăрă ăшă шывпа чÿхемелле, типĕтмелле, çакăн хыççăн тин качака сĕчĕ тултармалла. 4 кунран хăйма çăралать.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

Манна тата урпа кĕрписене пĕçериччен алламалла.

Вĕретнĕ чух сĕт çунса ларасран савăта сивĕ шывпа чÿхемелле.

Яшка пиçсен лавр çулçине кăларса илмелле.

Хĕрлĕ кăшман яшкине малтан пысăк çулăм çинче пĕçермелле, кăпăкне пуçтарса илнĕ тата ешĕл çимĕç хушнă хыççăн хупăлчапа витмелле те çулăма пĕчĕклетмелле.

Какай шÿрпи çăра пиçтĕр тесен какая сивĕ шыва ямалла – усăллă япаласем шыва куçĕç. Какая салат валли пĕçерес-тĕк вĕрекен шыва ямалла.

Апата тăвар хăçан ярасси мĕн хатĕрленинчен килет. Какая пиçсе çитес умĕн çур сехет маларах тăвар хушмалла, пулă шÿрпине, çĕр улмине – пĕçерме лартнă чухне, пăрçа йышшисене – çемçелнĕ хыççăн, кăмпана – плита çинчен илес умĕн.

Риспа вир кĕрпи часах пиçмеççĕ, çавăнпа вĕсене шывра 3-5 минут тытмалла.

Пахча çимĕçе сивĕ е лĕп шывра пĕçерсен унри С витамин хăвăрт пĕтет, çавăнпа ăна вĕрекен шыва ямалла.

Пахча çимĕçрен хатĕрленĕ апата пĕр-иккĕ çимелĕх çеç пĕçермелле – нумай тытсан витамин сахалланса юлĕ.

Атă пысăкрах пулсан хыçала поролон, бархат е плюш татăкĕ çыпăçтармалла.

Сăран пушмак çинчи варалансчăка бензинпа е пуçлă сухан сĕткенĕпе тасатма пулать.

Пăс çинче тытнă замш атта тасатма çăмăлрах.

Пушмак пĕр вырăнта тăвăр пулсассăн çав тĕле шăратнă ăвăс е парафин тумлатмалла, темиçе кунлăха калăп чикмелле.

Тăвăр пушмака одеколон, спирт е уксус ямалла. Тăхăнсан вăл сарăлать, сăран çемçелет.

Пушмак йĕпенесрен 40 грамм пулă çăвĕ, 10 пай ăвăс, 3 пай скипидар хутăшĕ сĕрмелле.

Хуппипе пĕçернĕ пахча çимĕçе вĕрилле тасатма çăмăлрах.

Кишĕр – 20-30, çĕр улми – 25-30, купăста – 30-50, хĕрлĕ кăшман – 80-90 минутран пиçет.

Купăстана малтан пĕçермелле, унтан тин ăшаламалла.

Тĕслĕ купăстана хурт лекме пултарать. Пахча çимĕçе тăварлă шыва ярсан вăл хăех тухĕ.

Пахча çимĕçе сулхăн, тĕттĕм вырăнта упрамалла, унсăрăн каротин çухалĕ.

* * *

Йывăç япаласене çыпăçтармашкăн килтех çилĕм хатĕрлеме пулать. 4 пай тăпăрча 1 пай нашатырь спирчĕпе пăтратмалла. Вăл юрăхсăра тухнă хатĕре йĕркене кĕртме пулăшĕ.

ЧÿРЕЧЕ АНИНЧЕ

## Тĕрĕс пăхмалла



Çутă çитмен чух ÿсен-тăранăн туни вăрăм, çинçе тата çутă пулать.

Нумай шăварнăран чечек туни çĕрме пуçлать. Вăхăт иртнĕçемĕн ку ÿсен-тăран пĕтет.

Темле лайăх пăхсан та чечек çулçине тăкать тата типет пулсан унăн тымарне тĕрĕслемелле. Ăна хурт ерме пултарнă. Кун пек чухне çĕре улăштармалла.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

## Чечексем

Чечекĕн сухан евĕр тымарĕсене тĕрĕслеме вăхăт – чиперех хĕл каçнă-и? Пĕр çул ÿсекен хăш-пĕр чечеке нарăс-пуш уйăхĕсенче акмалла. Пахчара ăçта мĕн ÿсессине план халех тусан аван – çурхи ĕçсем пуçлансан васкама тивĕ. Çапла вара вăрă мĕн чухлĕ туянмаллине палăртма та çăмăлрах пулĕ.

## Акма вăхăт

Пахча çимĕç вăррине калча валли акма кая юлман-ха. Малтан вăрра вĕрилесе дезинфекцилемелле. Вĕсен пысăк пайне 3-5 çул упрама юрать. Çакăн хыççăн вăрă шăтаслăхĕ чакать. Ăна хăвăр хатĕрлетĕр пулсан пĕчĕк хутаç çине хăсан пуçтарса хунине паллă тумалла.

Пăрăçпа помидор вăррине акас умĕн 50 градус ăшă шывра икĕ сехет тытмалла. Çакăн хыççăн сивĕ шыва ямалла. Унтан çур сехет марганцовка хутăшĕнче тытмалла /1 литр шыва 1,5-2 грамм марганцовка/. Юлашкинчен кĕл шывĕнче чăпăл тумалла – 1 литр шыва 1 чей кашăкĕ кĕл. Вăрă акмашкăн хатĕр!

Петрушка, укроп, сельдерей вăррине шывра /ăна кашни 4-5 сехетре улăштарса тăмалла/ икĕ кун тытмалла.

Калча тумашкăн вăрă акнă чух ăна сивĕ начар витĕм кÿнине ан манăр, çавăнпа çĕре урамран илсе кĕтĕр тĕк ăна темиçе сехет пÿлĕмре тытăр.

Çакна та асран ан кăларăр: сад хуçине çулталăкĕпех кĕтет. Кĕркунне лайăх пăхнă ÿсен-тăран хĕлле лăпкă ыйхăпа киленет, çуркунне хаваспах вăранать.



ШĂПА

# Телей кайăкĕ çунаттипе перĕнме маннă-ши?

Чÿрече умне ларчĕ те Анук шухăша путрĕ. Лайăххи те, япăххи те куçĕ умне килчĕ.

Йышлă çемьере çуралса çитĕнчĕ Анук. Çемьере кĕçĕнни пулнăран амăшĕ ăна юратарах пачĕ. Ыттисенчен уйăрарах пăхрĕ тесен те юрать. Пылак апат-çимĕç те аслисенчен вăрттăн ытларах тутанчĕ вăл. Кĕçĕнни ачашрах çитĕнет мар-и? Пиччĕшĕсемпе аппăшĕсен ăна кÿрентерме юрамастчĕ. Куншăн лешсене хăйсене лекетчĕ. Ашшĕ-амăшĕ ĕçре чухне аслăраххисен ачашкере куçран вĕçертмелле марччĕ. Пиччĕшĕсемпе аппăшĕсенчен пĕр утăм та юлмастчĕ хĕр пĕрчи. Вĕсем ăсталла, вăл та вĕсем хыççăн йĕре-йĕре чупатчĕ. Апла пулсан та аслисем юрататчĕç Анука. Халĕ те уявсенче пĕр тăвансем пĕрле пухăнсан çав вăхăтсене аса илсе нумайччен калаçса-кулса лараççĕ. Анчах, хаваслă ачалăх ытла та хăвăрт иртсе каять çав. Ăна каялла ниепле те тавăрса килме çук.

Шкулта вĕреннĕ чухне çуллахи каникулсенче ялти ытти ачапа пĕрле колхоз ĕçне хутшăнчĕ Анук. Никамран та юлса пымарĕ. Хирте утă тавăрчĕ, йĕтем çинче тырă алланă çĕре хутшăнчĕ, кĕлете михĕпе тырă та йăтрĕ, кăшман, çĕр улми уйĕсенче çум курăкпа кĕрешрĕ... Çăмăлах пулман та, çапах чăтнă. Шкула каймалăх кăштах та пулсан укçа-тенкĕ ĕçлесе илес тесе тăрăшнă. Çуллахи каникул вăхăтĕнче колхоз ĕçĕнче тăрăшулăх кăтартнăшăн панă Тав хучĕсемпе грамотăсем халĕ те упранаççĕ-ха унăн. Ачашрах ÿсрĕ пулсан та ĕçрен пăрăнтарман Анука, çамрăклах пилĕкне авма тивнĕ.

Çамрăклăх сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Шкул пĕтерсен ниçта та малалла вĕренмерĕ, тÿрех ĕçе кÿлĕнчĕ хĕр. Малтанах колхозра вăй хучĕ. Шăрăх-и, сивĕ-и – ялан ĕçе васкарĕ вăл. Тăрăшулăхпа, маттурлăхпа палăрса тăчĕ. Хĕсĕкрех пурнăç ăна та çуллахи шăрăх кунсенче кÿршĕллĕ Тутар республикине сахăр кăшманĕ çумлама темиçе çул та илсе çитерчĕ. Килти ĕçсене те пурнăçламалла, ашшĕпе амăшĕ мехел çитерейместчĕç: ватлăхĕсем кунран-кун пусса пыратчĕç. Выльăх-чĕрлĕх йышлă тытатчĕç вĕсем. Çулленех сысна çăвăрлаттаратчĕç. Хушма тупăш тупма тăрăшатчĕç. Самана улшăнма пуçласан ĕнине сутрĕç. Ашшĕ çĕре кĕрсен пĕр-икĕ çултан сысна та тытма пăрахрĕç. Тырри-пулли хаклăланчĕ, ăна илме вара укçа хĕсĕкрех пулчĕ. Тепĕр икĕ çултан амăшĕ те çут тĕнчерен уйрăлса кайрĕ. Килте пĕччене тăрса юлчĕ Анук. Çемье çавăрма май килмерĕ унăн. Ашшĕ-амăшне пăхакан пулмĕ тесе каччăсене сивлесе пурăнчĕ. Çулсем вара кĕрлесе юхакан çырхи шыв пекех иртсе пычĕç.

Амăшĕ вилнĕ хыççăн Анукшăн пурнăç пĕтнĕн туйăнчĕ. Пур ĕçе те иккĕшĕ сÿтсе яватчĕç вĕсем. Амăшĕнчен хаклăрах çын та çукчĕ çĕр çинче уншăн. Кашни самантрах юратнă çынни пирки аса илет вăл. Пĕрле ирттернĕ юлашки кунсем тата ытларах ыраттараççĕ Анукăн чунне. Амăшĕн вилĕмĕшĕн хăйне паянхи кунччен айăплать вăл. Çав кун вăл пахчана çум çумлама тухман тăк, тен, апла пулса тухмастчĕ пуль. Анчах халь тин нимĕн те тăваймăн.

...Çуллахи канмалли кунччĕ. Анук анкартинчи çĕр улмипе кăшмана çум курăкран тасатма тухрĕ. Кÿршисем 4-5 кун каяллах тирпейленĕ пахчине. Вĕсем ĕçе çÿремеççĕ те. Анукăн вара ирĕксĕрех канмалли кунсенче тăрмашма тивет. Амăшĕ хăйне япăх туйнине, пуçĕ ыратнине ирех пĕлтерчĕ-ха. Апат та çиесшĕнех пулмарĕ. Юн пусăмĕ пысăкчĕ унăн. Эмел ĕçтерчĕ ăна хĕрĕ, чей вĕретсе пачĕ. Пахчана тухма хатĕрленнĕ чухне амăшĕ Анука симĕс сухан çиес килнине пĕлтерчĕ. Илсе кĕрсе пачĕ. Анчах пĕр çулçăран ытла çимерĕ ват çын. Хĕрне пахчана тухма тăхтама ыйтрĕ, калаçса ларасшăн пулчĕ. Анчах Анук канмалли кунпа туллин усă курас тесе амăшĕн сăмахне шута хумарĕ. Ăна вырăн çине вырттарчĕ те ĕçе пикенчĕ. Хушăран пÿрте кĕрсе тухкаларĕ. Амăшĕ харлаттарни илтĕннĕрен /яланах çапла çывăратчĕ амăшĕ/ унăн пÿлĕмне кĕрсе те пăхмарĕ. Каçченех çум çумларĕ вăл. Ĕç вĕçлесе пÿрте кĕрсен амăшĕ çав-çавах çывăрнинчен тĕлĕнсе унăн пÿлĕмне кĕчĕ. Кĕчĕ те... вырăнтах хытса тăчĕ. Амăшĕ вырăна урлă выртать. Те тăма пуçласа йăванса кайнă, те?.. Амăшĕ умне пĕшкĕнчĕ вăл. Юратнă çынни хăрăлтатнисĕр пуçне пĕр сăмах та чĕнеймерĕ, куçне уçмарĕ. Васкавлă пулăшу машини амăшне больницăна илсе кайрĕ. Анук та пĕрлех çула тухрĕ. Кунта та сываласси пулмарĕ, вунă кунран киле ячĕç вĕсене. Пĕр талăкран яланлăхах уйрăлса кайрĕ амăшĕ. Çавăнтанпа пĕчченех кунпа çĕре ирттерет Анук. Малтанах пурăнасси те килмерĕ унăн. Мĕншĕн, камшăн? Вăхăт иртнĕçем чĕрери суран сиплене пуçларĕ. Хăйне хăй алла илчĕ.

Сехет йĕпписем пĕр чарăнмасăр малаллах васкаççĕ. Анукăн çулĕсем те хушăнсах пыраççĕ. Çамрăк чухне юратнă каччи ун патне темиçе хутчен те шăнкăравларĕ. Лешĕ те авланман иккен. «Сансăр пуçне мана урăх никам та кирлĕ мар», – тесе каланăччĕ вăл уйрăлнă чухне. Чăнах та çаплах иккен. Анук та унсăр пуçне никама та савма пултараймарĕ. Ашшĕ-амăшне шелленĕренех çемье ăшшине туйса кураймарĕ хĕр. Тĕрĕс турĕ-и е çук-и çакна халь кам калĕ? Уявсенче пĕр-пĕрин патне салам сăмахĕсем паян та вĕçтереççĕ юратакан чĕресем. Пĕр-пĕрин пурнăçĕпе кăсăкланаççĕ. Анчах пĕрле пурăнасси пирки кăна текех калаçмаççĕ. Каччă яла куçасшăн, хĕр ашшĕ-амăшĕн çуртне хупасшăн мар. Телей кайăкĕ вĕçсе иртнĕ чухне Анука çунаттипе перĕнме маннă-ши? Çавăнпа унăн пурнăçĕ çапла килсе тухрĕ пулас.

Урамра юр çума чарăннă. Анук ассăн сывласа чÿрече патĕнчен пăрăнчĕ те тумланма тытăнчĕ. Кăпăшка юра хырса тасатас шухăшпа алăкран тухрĕ...

**Александр КУРАКОВ.**



ЭХ, ПУРНĂÇ

# «Арăмна хытăрах ытала»

"Сана курмасăр ыйхă килмест. Çепĕççĕн ыталаса илетĕп те ĕмĕтсенче – кăмăл тÿпенеллех çĕкленет..." – çак сăмахсем хăть мĕнле хĕр чĕрине те витермелле пек. Марине те йăл кулса илчĕ çав. Анчах çийĕнчех: "Арăмна хытăрах ытала", – тесе телефона сÿнтерчĕ. Уншăн халĕ кашни арçын – "авланнă"! Паспортра штамп пур-и е çук-и – пĕлтерĕшлĕ мар. Пĕччен мар – эппин, авланнă. Пĕр тÿшек çинче çĕр каçаççĕ вĕт.

Халĕ хĕршĕн ку сăмахсем каларăш вырăнĕнче кăна. Темиçе çул каялла, аслă шкулта вĕреннĕ чухне вара, шăпах çак сăмахсене унăн тăварлă куççуль витĕр калама тивнĕччĕ. Ун чухне кăмăлтан савнă çынни чун-чĕринче тарăн йĕр хăварчĕ.

Пĕр шкулта вĕреннĕскерсем аслă шкулăн анлă коридорĕнче тĕл пулсан питĕ савăнчĕç. Ют çĕрте пĕр-пĕриншĕн хÿтлĕх вырăннех пулса тăчĕç вĕсем. Общежитире те хĕр хăйшĕн кăна мар, Кирилл валли те апат янтăлатчĕ. Кирлĕ чухне кĕписене те çуса-якатса паратчĕ. Малтан юлташла кăнаха, кайран вара хăйсем те сиссе юлмарĕç – юрату авăрне çакланчĕç.

Çакăн çинчен пĕлсен Марине ашшĕ-амăшĕ вăрçăнмарĕ: Кирилл çемйине таврара япăхпа аса илмеççĕ, çÿреччĕр-иç.

Каччă вара килтисене ку хыпара пĕлтерме васкамарĕ. Уншăн аслисем ним те пĕлмесен аванрах та. Ашшĕ-амăшĕ ывăлне шкул пĕтерсенех "çемье канашне" чĕннĕччĕ. Калаçу вăраха тăсăлмарĕ, анчах каччă асĕнче ĕмĕрлĕхе юлчĕ тесен те юрать. Кирилл пуласлăхĕ пирки сăмах пычĕ. Ашшĕ-амăшĕ çамрăк валли пике пăхса хунă иккен. Вĕсем тинĕс хĕрне канма пĕрле çÿренĕ пĕлĕшĕсен хĕрне килĕштернĕ. Лешсен – хăйсен фирма, укçаран татăк пулас çук. Кирилл пурнăç панă çыннисен сăмахĕпе килĕшсе пуçне сĕлтнĕ кăна.

Ун чухне каччă урăх хĕре юратса пăрахасси пирки шухăшлама та пултарайман. Çав калаçу манăçа тухасса шаннă çав. Ялта Маринепе Кирилл çинчен сăмах сарăлсанах яшăн тăванĕсем хĕр çураçма васканă. Анчах вĕсен "тимĕр урхамахĕ" Маринен килĕ умĕнчен вашлаттарса кăна иртсе кайнă, хула çывăхĕнчи чаплă пĕр çурт умĕнче чарăннă.

Кирилпа Настя туйне уйăхран кĕрлеттерме калаçса татăлни пирки Марине ял хапхи урлă каçсанах пĕлет. Малтанах ĕненмест: "Пулма пултараймасть, Кирилл яланах манпа юнашар. Урăххи патне çÿресе те курман вăл. Калаçаççĕ пуль ним тума аптăранăран", – пачах та иккĕленмесĕр калаçать амăшĕпе вăл. Тÿрех чун савнийĕ патне шăнкăравлать. Телефона сÿнтерни пирки пĕлтерет оператор. Анчах Кирилл телефонĕ тепĕр кун та "шарламасть". Клубра курнăçма шанать – кăлăхах. Тепĕр кун ирех общежитие васкасах пуçтарăнать. Анчах тусĕсем Кирилл куçăмсăр майпа вĕренме куçнине пĕлтереççĕ. "Ан шÿтлĕр-ха, эпĕ сирĕнпе чăнласа калаçатăпçке", – ĕненесшĕн мар çаплах хĕр. Пÿлĕмрен тухас умĕн "йыхрав хучĕ" тесе çырнă хута курсан алла илмесĕр чăтаймарĕ вăл.

Унти "...Кирилпа Настя" сăмахсем чи хăватлă наркăмăш пулса тăчĕç ун чухне Маринешĕн. Чун-чĕрине чăтмалла мар çунтарса асаплантарчĕç...

Черетлĕ сесси вăхăтĕнче ăнсăртран тĕл пулчĕç вĕсем. Кирилл хĕре аллинчен ярса илчĕ те çын çук вырăналла ертсе кайрĕ. "Сансăр пурăнаймастăп, сана кăна юратнине ăнланса илтĕм. Настьăна юратаймăп эпĕ. Тĕлĕкре те сан ятна аса илетĕп иккен..." – татах тем каласшăнччĕ Кирилл, анчах Маринен шăпах çак самантра экзамена кĕме черечĕ çитрĕ. Ку хутĕнче экзамен хĕршĕн çăлăнăç пулса тăчĕ. Билетри ыйтусем кĕтмен калаçăва манма хистерĕç.

Анчах чун-чĕрере тĕвĕленнĕ черчен туйăмран питĕ çăмăллăн хăталаймăн. Университет умĕнче кĕтсе тăракан Кирилл умĕнчен палламан пек иртсе кайма пултараймарĕ Марине. Çав тери ачашшăн, унчченхи пекех, пăхнăран çамрăк арçын ытамне ыткăнасси те килчĕ унăн. Çав вăхăтра арăмĕ шăнкăравламан пулсан Марине чунри ыратăвĕ, хĕр мăн кăмăллăхĕ пирки аса илĕччĕши? Кирилл телефона тÿрех сÿнтерчĕ. Вăл Маринене аллинчен тытасшăнччĕ, анчах лешĕ вăрт кăна айккинелле пăрăнчĕ те: "Арăмна хытăрах ытала," – тесе усалран тарнă пек çаврăнса пăхмасăр васкаса утрĕ. Чуна çунтаракан ыратăва çапла хыçа хăварма пулсанччĕ-и...

Марине улшăннине тусĕсем каникул хыççăнах асăрхарĕç. Пули-пулми сăмах хушмасть. Ытларах пĕччен пулма тăрăшать. Илĕртÿллĕ пикепе каччăсем паллашма тăрсан илтмĕш пулса çаврăнса утать, никама та асăрхамасть тейĕн.

Вăхăт сиплет теççĕ. Хаваслă тусĕсен витĕмĕпе Маринен сăнĕнче те йăл кулă курăнма пуçлать, çаплипех яшсенчен пăрăнма тăрăшать.

Общежитире юнашар пÿлĕмре пурăнакан Саша чиперккен кăмăлне çавăрма çав-çавах майне тупрĕ. Вĕсем кинона, театра пĕрле çÿреме пуçласан хĕр тусĕсем савăнчĕç кăна. Анчах нумайлăха мар, пĕр кунхине ялтан Сашăн савнийĕ килнине пĕличчен. Каччă вĕсем тахçанах хутшăнма пăрахнипе сăлтавласа тÿрре тухма тăрăшрĕ. Марине ăна итлесшĕн те пулмарĕ: "Мĕскер, эсир, арçынсем пачах та юратма пĕлместĕр? Юратăва пайлама пулать-им? Пĕрне юратма пĕлеймесĕрех тепринпе çывăхланасшăн. Зина сана чунран савать, ăна хисеплеме вĕрен, çепĕçрех пул, ăшшăнрах ытала та пĕрремĕш юрату хăватлă пулнине, вăл нихăçан та манăçманнине ăнланса илĕн," - нумай çул пурăнса курнă ăслăтăнлă çын пек калаçрĕ Марине. Анчах ку хутĕнче пĕр тумлам куççуль те кăлармарĕ. Чунĕ çирĕпленсе пынине ăнланчĕ хĕр.

Çулсем иртнĕ май Марине философла калаçса вăхăтне ирттермест. Ĕçри арçынсем тĕл пулма чĕнсен тÿрех: "Арăмна хытăрах ытала," – тесе пур ыйтăва та хурав парса татать. Анчах арçынна улăштараймăн иккен: хăть çамрăкки, хăть аслăраххи юттине куç хывать. Пĕри тата çывăрас умĕн те шăнкăравлама пултарать. "Эсĕ мана маннă," – ÿпкелешет хайхискер. "Эпĕ мĕн, ас тунă-им сана?" - тесшĕнччĕ те Марине çапах килĕштернĕ каларăшне тепĕр хут аса илтернипех çырлахрĕ. "Санаторие каяр-ха пĕрле," – йăлăнать тепри. Унта арăмĕпе кайма çук-им? Романтика-мĕн... Каллех кама ыталамаллине систерет Марине.

Хăй вара çаплах пĕччен. Ара, пурте авланса пĕтнĕ вĕт.

**Н.МАРИНОВА.**

КӲРШĔСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

Никон ИГНАТЬЕВ

# Хусанта

/«Хурçă çил» роман сыпăкĕ/

**Мĕн авалтан ваттисем: «Кӳршĕ тăванран хаклăрах», – тенĕ. Тĕрĕсех ĕнтĕ. Тăван аякра, кӳршĕ – юнашар. Пĕрле пурăнса, ĕçлесе-çисе кун кунламалла. Ĕлĕкренпех чăвашпа мари пĕр-пĕринпе туслă пурăннă. Чăвашăн паллă этнографĕ, çыравçи С.Михайлов-Янтуш Козьмодемьянск хулинче нумай çул ĕçлесе пурăннă, икĕ халăхăн йăли-йĕркине тĕпчене. Унăн «Капустник» очеркне асăнмасăр май çуках. Марипе чăваш çамрăкĕсем пĕрле ирттерекен уяв çинчен сăмах пырать кунта. Çуллахи шăрăх кун икĕ халăх çамрăкĕсем пухăнса савăнаççĕ: тури чăвашсемпе ту ен марисем.**

**Козьмодемьянск хулине чăвашсем Чикме теççĕ. Çеçпĕл Мишши ахальтен мар ĕнтĕ чăваш сăвви Кавалтан Чикме таран янăрасса шаннă. Мари тата чăваш çыравçисем туслă пурăнаççĕ. Мари халăх поэчĕ Миклай Казаков чăваш халăх поэтне Петĕр Хусанкая сăвăсем халаллană. Вĕсем пĕр-пĕрин патне хăнана çӳренĕ, пуш алăпа мар – пĕр-пĕрин сăввисене тăван чĕлхене куçарса. Ара, Атăл урлă лар та каç. Тен, икĕ халăх хутшăнса пурăннăранах йăли-йĕрки те пĕр евĕрлĕ. Сăмахран, Миклай Казаковăн «Сăрта çапла ят панă та» очеркне чăвашла куçарнă чухне тĕлĕнмеллипех тĕлентĕм. «Качча каякан хĕр ташланă сăрт» пур иккен. Эрик ятлă мăнукне сакăр вунă çултан иртнĕ Яков Михайлович каласа кăтартать. Туя каякан çынсен тумтирĕ вара – чăн чăвашăн: сурпан, хушпу, хăнана каймалли тумтир… Туя кайнă чухне шăпăр калаççĕ.**

**Тури чăвашсен Автан çырми пур, Чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев çуралса ӳснĕ ял çумĕнче вăл – Элĕк районĕнчи Тури Вылăра. Марире вара Автан сăрчĕ пур. «Мĕн авалтан çармăссем тӳ курма юратаççĕ, уйрăмах – çамрăксем, кирек мĕнле çанталăкра темиçе çухрăмран чупса çитеççĕ тӳй курма». Мĕнле пĕр пеклĕх! Йăла вĕрентнĕ пек тыткалаççĕ хăйсене çамрăксем. Миклай Казаков йĕркисене вуласан асăрхатăн çавна.**

**Мари çыравçисен антологине чăвашла куçарса кăларма шухăшларăмăр. 2002 çулта «Элнет юррисем» ятпа кун çути курчĕ вăл.**

**ЧР Культура министерстви кашни çулах марисемпе пĕрле Культура кунĕсем ирттерет. Пĕр çул мана та чĕнчĕç хăнана. Чылайăн пухăнса кайрăмăр Чикме хулине. Йышăн кайрăмăр эпир: филологи наукисен кандидачĕсем Виталий Станьял, Вениамин Димитриев, истори наукисен докторĕ Геннадий Тафаев, Чăваш кĕнеке издательствин ĕçченĕ Галина Матвеева, Мăн Сĕнтĕрти халăх пултарулăхĕн коллектив членĕсем /Муркаш районĕ марисемпе ăмăртса ĕçлет/. Чăвашпа мари чиккинче чарăнтăмăр, автобусран тухса ташларăмăр. Каллех малалла çул тытрăмăр. Сисмерĕмĕр те Козьмодемьянск хулине çитнине. Ăшшăн кĕтсе илчĕç пире. Чи малтанах уçă тӳпе айĕнчи экологи музейĕнче пултăмăр. Çав тери пуян вăл. Ял çыннисен ĕç хатĕрĕсем, çил арманĕ пур, тарасаран шыв та ĕçрĕмĕр. Улмуççи пахчи. 20 гектар йышăнать.Музейран тухас та килмест. Козьмодемьянск – Остап Бендер кĕтесĕ те. Ун музейĕнче те пултăмăр. Музей хыççăн музей. Чикме çав тери илемлĕ хула. Инçех те мар Никон Игнатьев çуралса ӳснĕ ту ен мари районĕнчи Чаломкино ялĕ вырнаçнă. Унта та çитсе куртăмăр. Никон Васильевич 1895 çулта çуралнă. Сăвă, калав, пьеса çырнă, çармăссен пĕрремĕш роман авторĕ те. Вăл çырнисем виçĕ томпа пичетленсе тухнă. СССР писателĕсен пĕрремĕш съезчĕн делегачĕ пулнă. 1944 çулта вилнĕ. Унăн «Старое умирает» повеçне чăвашла куçарса кăларнă. Çармăссем хăйсен çыравçине питĕ хисеплеççĕ, чыслаççĕ. Вăл çуралнă ялта ун музейĕ пур. Музейра чăвашла, çармăсла юрăсем янăраççĕ.**

**Унтанпа вунă çул иртрĕ. Çапах та çав кун паян пулса иртнĕ пек туйăнать. Никон Игнатьев çырнисене вуласан чăваш çыннин пурнăçĕ куç умне тухса тăрать. «Савки» роман Лапшу Çтаппанне, Патяна аса илтерет. «Хурçă çил» романăн «Хусанта» сыпăкĕ Çемен Элкерĕн «Унтри» очеркне çывăх.**

**Никон Игнатьевăн юбилейĕ çывхарать. Мари халăхĕ хăйĕн пултарулла çыравçине асрах тытать, юбилее хатĕрленет. Эпир те унăн хайлавĕсене чăвашла куçарма шухăшларăмăр. Вулакансене парне пултăр.**

**Роза ПЕТРОВА-АХТИМИРОВА,**
**педагогика ĕçĕн ветеранĕ.**

Эпĕ ултă çултаччĕ...
Унтан çичче пусрăм...
Халь эпĕ саккăрта...

Ача чухне вăхăт епле хăвăрт иртнине туймастăн та.

Кĕркунне атте мана кивĕ сăхмана тăхăнма хушрĕ те кӳршĕ ялти шкула вĕренме илсе кайрĕ. Çуллахи пек ăшă кун тăратчĕ, чăн-чăн пукрав ăшши. Сывлăшра эрешмен картисем тăсkаланса выляççĕ, йывăç тураттисем çине те çакăнаççĕ, ман сăхмана та сырăнаççĕ.

Анлă çул çине тухсан атте манпа ăшшăн калаçма пуçларĕ. Эрех ĕçмен чухне вăл яланах ырă кăмăллă.

– Петĕр, – сӳнĕ чĕлĕмне тепĕр хут чĕртсе çапла каларĕ: – Эсĕ акă мĕн...

– Мĕн? – ыйтрăм эпĕ.

– Аçу пек ĕçекен çын ан пул, – ассăн сывларĕ вăл. – Этем пул.

– Юрать, – хураврăм эпĕ, – тăрăшатăп.

Пĕр хушă шăпăртах утрăмăр. Атте чĕлĕмне сӳнтерчĕ, çĕре пăрахрĕ те урипе таптарĕ, каллех калаçма пуçларĕ:

– Итле-ха...

– Итлетĕп, атте.

– Тăрăшса вĕрен. Вĕренмесен ырă пурнăç кураймăн... Ыррине курмасан пурăннин усси çук.

Çăва патне çитиччен вара шăпăрт пулчĕ. Пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Пирĕн çăва хурăнлăхра, сăртлă вырăнта. Хурăн çулçисем сарăхнă, çилпе вĕçсе хуллен çĕр çине ӳкеççĕ. Ӳкекен çулçăсем çине пăхса мана тунсăх пусрĕ.

Çăва патне çитсен атте чарăнса тăчĕ, аллипе тĕллесе каларĕ:

– Куратăн-и кукăр хурăна? Турачĕсем хуçăлнă. Унта сан Мефоди пиччӳ выртать. Унтан инçех мар Лексанурккăна пытарнă. Ас тăватăн-и ăна?

– Ас тумастăп.

– Çапла çав, эсĕ ун чухне пĕчĕккĕччĕ. Çулла вилчĕ вăл. Вар-хырăмĕ пăсăлнипе. Чĕкрене ернĕччĕ. Кам пĕлет, тен, сывалатчĕ те пулĕ. Хĕветĕр арăмĕ ăна çĕмĕрт хуппине вĕретсе ĕçтермен пулсан... Тухтăрсăрах сыватма пулать терĕ. Çавăн хыççăн Лександра вилчĕ çав...

Шкул умĕнче ачасем выляççĕ. Эпир аттепе учительница патне кĕтĕмĕр. Сĕтел хушшинче тем çырса ларатчĕ. Атте пуç тайса сывлăх сунчĕ.

– Сывлăх сунатăп, – хураврĕ учительница. – Вĕренме килтĕн-и? – ыйтрĕ вăл манран.

– Вĕренме, – хураврĕ атте. – Йышăнатăн-и?

– Йышăнмалла пулать, – вĕрентекен ман çине тинкерсе пăхрĕ. – Эсĕ Павăл шăллĕ мар-и?

– Шăллĕ.

– Сан Павăл пиччӳ питĕ лайăх вĕренет. Эсĕ мĕн ятлă?

– Петĕр.

– Шкула çӳреме тытăнатăн, Петĕр.

Эпĕ вĕренме тытăнтăм. Ирсерен кĕсьесене пан улми тултаратăп, пиртен çĕленĕ хутаçа вĕтӳ чикетĕп, ыттисемпе пĕрле аслă çулпа шкула чупатăп. Кĕсьери пан улмисем туха-туха ӳкеççĕ, юлташсем вĕсене васкасах пухаççĕ...

Кĕркунне... Хĕлле... Çуркунне...

Çулталăк иртрĕ, тепри те...

Вăхăт сисĕнмесĕрех шăвать, юртăпа чупакан тиха пек – чараймастăн ăна. Шкулта вĕреннĕ çулсем тĕлĕкри пекех хăвăрт иртсе кайрĕç. Виççĕмĕш çул кĕркунне атте вилчĕ. Анне пысăк хырăмлăччĕ. Ача çуратмалла. Кам пире тăрантарĕ, çитерĕ, тумлантарĕ? Павăл та пĕчĕккĕ-ха. Чылай шухăшланă хыççăн анне çапла каларĕ:

– Сана мăнастире пама тивет пулĕ.

Сурск мăнастирĕнче вĕренекенсене вĕрентнĕ те, апат та çитернĕ. Çитернĕ тени – ячĕшĕн кăна. Манахсем пире хăйсем çинĕ хыççăн юлнă апат-çимĕçе кăна паратчĕç. Ялсем тăрăх пуçтарса çӳренĕ чухне ялан пĕр юрă юрлаттăмăр:

– Ылтăрах ярса парăр-ха. Пирĕн вĕренекенсене те çитермелле вĕт.

Мăнастирте эпĕ икĕ çул пурăнтăм. Пуçламăш шкултан вĕренсе тухрăм. Çавăнтах икĕ класлă шкул пурччĕ, анчах унта вĕреннĕшĕн укçа тӳлемеллеччĕ. Манăн питĕ вĕренес килетчĕ. Пĕр самăр игумен патне стипенди ыйтма кайрăм.

– Сире вĕрентнинчен ним усси те çук, – терĕ игумен. – Учителе вĕренсе тухатăр та турра ĕненме пăрахатăр, патша портречĕсене стена çинчен сĕтĕрсе антарма пуçлатăр...

Мана стипенди памарĕç.

Çăвĕпех «мĕн тăвас-ши» тесе шухăшларăм. Пур пĕрех вĕренме тапалантăм. Ăçта каймалла? Ăçта вĕренме тытăнмалла? Çурла уйăхĕнче вулăс правленийĕнчен паспорт илтĕм – вĕренме каятăп тесе. Пукравра Павăл пиччепе Сумки пасарне кайрăмăр. Кулач, пыл туянтăмăр, апат çиреймĕр. Павăл хамăр ял çыннипе калаçса таталчĕ те ун лавĕпе яла кайрĕ.

«Эх, пулнă пулнах», – терĕм те Хусана каякан пăрахут çине лартăм.

Ман пурĕ те виçĕ тенкĕ укçа пур. Çуррине анне пачĕ, çуррине çу касипе хам пухрăм. Эпĕ хам пирки нимех те шухăшламарăм-ха. Анне вара... Ют çĕрте çухалса ан кайтăр тесе кулянать ĕнтĕ.

Ку таранччен эпĕ Хусанта мар, Чикмере те пĕрре пулса курман. Ял çыннисем Хусан пысăк хула тесе каланине илтнĕччĕ. Çул тăршшипех Хусанта мĕнле пурăнăпши тесе шухăшласа пытăм. Ахальтен каламан пулĕ эпир çук çĕрте лайăх тесе.

Ман пуçра çакăн пек шухăш явăнать: эпĕ пĕчĕккĕ мар, вулама-çырма пĕлетĕп, вырăсла та аванах калаçатăп. Тумланма яка тăхăннă. Иртнĕ çул пан улми ăнса пулчĕ. Аванах сутрăмăр. Çав укçапа ман валли пиншак çĕлетрĕç, йĕм, атă туянчĕç. Ку ман урана кĕнĕ пуçламăш атă пулчĕ, унччен çăпатапа çӳренĕ-çке.

«Хусанта эпĕ ăçта та пулин вĕренме кĕретĕп, кĕреймесен, приказчикре ĕçлĕп. Малтанхи ик-виç уйăхра апат çимелĕх ĕçлĕп. Унтан укçа парĕç ĕçленĕшĕн. Тăрăшăп, хуçа мана хăй ывăлĕ пек йышăнĕ /темшĕн-çке мана ача-пăчасăр хуçа патне лекессĕн туйăнатчĕ/, ун чухне эпĕ укçаллă пулăп та киле ярса пулăшăп...»

Ман ĕмĕтсем пурнăçланма пултарайманнине кайран кăна ăнлантăм. Эпĕ ун чухне ытла та çамрăк пулнă-çке...

Хам пурнăçра пуçласа пăрахутпа ишетĕп. Маншăн пурте тĕлĕнмелле: машина мĕнле ĕçленине пăхма чупатăп, иртсе каякан пăрахутсемпе баржа, çынсем çине пăхатăп. Çывăрса каяймасăр кăшкăртăм, çапах та хам ыйăха путнине сисмен те. Пăрахут кăшкăрнă саспа вăранса кайрăм. Эпир пристаньре тăратпăр, Хусана çитнĕ иккен.

Пысăк çуртсем. Сарлака та вăрăм урамсем. Трамвайсем, унталла та кунталла чупакан автомобильсем... Çынсем, çынсем... Çурхи шыв вăхăтĕнчи пек утаççĕ. Йĕри-тавра шăв-шав янăраса тăрать.

Хула мана пĕр пысăк тискер чĕр чун пек туйăнса кайрĕ, пин-пин çынна хăйĕн шăтăкне хăваласа кĕртнĕн туйăнать. Эпĕ те çак тискер чĕр чун чĕрнине çаклантăм.

Икĕ кун ĕç шыраса хула тăрăх сулланса çӳрерĕм.

Пĕр çурта пырса кĕретĕп те ыйтатăп:

– Ĕçлеме кĕресшĕн. Вырăн çук-и?

– Ниĕмĕнле вырăн та çук, – хураvлаççĕ.

Тепĕр çурта пырса кĕретĕп.

– Вырăн çук-и?

Кунта калаçасшăн та мар. Аллисемпе сулаççĕ кăна.

– Ут, ут хăвăн çулупа! Сан пеккисем нумай çӳреççĕ кунта! – алăкран тĕртсе кăларса яраççĕ.

Хăш-пĕр киле пачах кĕртмеççĕ.

Ыйткалакан пек çӳретĕп вĕт. Намăс. Ахалех ĕçлеме хатĕр эпĕ вĕсемшĕн. Йыттисене манран вунă хут тутлăрах çитереççĕ. Никама та кирлĕ мар эпĕ. Мĕншĕн-ха çын çав тери йӳнĕ тăрать?

Сасартăк мана урамра йĕркеллĕ тумланнă çын чарчĕ. Çамрăк, сӳллĕ, уссиллĕ, вăрăм питлĕскер.

– Эсĕ мĕн те пулин шыратăн пулас? – ыйтрĕ вăл.

– Ĕç шыратăп.

– Сана турă хăй янă ман патăма! – хаваслăн каларĕ хайхискер. – Эпĕ сана ĕç тупса паратăп. Пыратăн-и?

Эпĕ савăнса кайнипе пĕр сăмах та чĕнеймерĕм, пуçа çеç сĕлтрĕм.

Эпир кĕтсе тăраттăмăр. Çумăр çумастчĕ, сивĕ çил ман çӳхе пиншак витĕр аванах вĕретчĕ. Йĕри-тавралла пăхса илтĕм. Çынсем утса иртеççĕ, сайра хутра трамвай иртсе каять, завод мăрийĕнсен тухакан сĕрĕм пĕлĕтелле явăнса хăпарать.

– Мĕнле ĕç? – ыйтрăм хам пуçласа куракан çынран.

– Ĕçĕ çăмăл. Ман иккĕмĕш сыпăкри пиччен лавкка пур, ăна приказчик кирлĕ. Эсĕ хутла пĕлетĕн-и?

– Пĕлетĕп.

– Чăваш-и?

– Çук, çармăс.

– Вырăсла тасах калаçмастăн та, çавăнпа ыйтрăм. Ку темех мар-ха. Мĕн ятлă эсĕ?

– Ефимов Петр.

Хайхи кĕсйинчен кашни кун çырса пыракан тетрадь туртса кăларчĕ те пĕр страницине çурса илчĕ, тем çырчĕ.

– Трамвай çине лар та эпĕ панă адреспа кай. Çырăва пар та кала, пичче ячĕ тесе. – Вăл туртса ячĕ, сăмах хушрĕ: – Сан çумра укçа çук пулĕ? Эпĕ укçа енчĕкне киле манса хăварнă. Пырсан паратăп. Эпир пиччепе пĕрле пурăнатпăр.

– Пĕр тенкĕ ылтарах пур, – терĕм эпĕ.

– Сахалтарах. Ылтарах кирлĕччĕ. Юрĕçке, пар эппин.

Эпĕ савăнса кайнăскер, пĕр тенкĕлĕх хут укçана кăларса тыттартăм. Кĕсьере хамăн вăтăр пус юлчĕ.

Вăл мана çыру тыттарчĕ.

– Журавлева ыйт. Ăна унта пурте пĕлеççĕ, кашниех çул кăтартса ярĕ.

Эпĕ палламан çынна чĕререн тав турăм та трамвай патне чупсах кайрăм.

Нумай сулланса çӳрерĕм, Журавлева тупаймарăм. «Тен, йăнăшрăм?» Çырура мĕн çырнине вунă хут та вуласа тухрăм пулĕ: «Коля, устрой Ефимова приказчиком. Парень хороший». Твой брат Гена. 4/Х – 1908 г.

Тепĕр енче адрес: «Устье. Бакалейная лавка Журавлева».

– Калăр-ха, тархасшăн, – иртсе пыракансенчен ыйтрăм эпĕ. – Ăçта кунта Журавлевăн бакалея лавкки?

Иртсе пыракансем хул пуççисене вылятса илсе каларĕç:

– Ун пек çынна пĕлместпĕр.

Пĕр çын чарăнса тăчĕ те манран тĕплĕн ыйтса пĕлчĕ. Мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех каласа патăм. Укçа панине те асăнтăм.

– Сана улталанă, – терĕ эпĕ каласа кăтартнине илтнĕ хыççăн. – Эсĕ Хусанта пĕрремĕш хут-и?

– Çапла, – аран-аран каларăм эпĕ.

– Çапла пулĕ çав терĕм. Кунта çивĕч пулмалла.

Эпĕ макăрса яма хатĕрччĕ. Ухмах, юлашки укçана кăларса патăм вĕт. Мĕн тумалла халĕ манăн? Ăçта каймалла? Каç пулчĕ, эпĕ ют хулара пĕччен. Хула халĕ маншăн пысăк тĕрме пек туйăнчĕ...

**Борис БОРИСОВ куçарнă.**

ÇĂЛТĂР ÇУМĂРĔ

# Чи хитре кукамай

**Орнелла Мути – Итали киновĕн чи çутă çăлтăрĕсенчен пĕри. Пултарулăхне тата пуç çаврăнмалла илемне пула хĕрарăм тĕнче шайĕнче чапа тухнă. Паян çак чиперкке çинчен ахальтен сăмах пуçармарăмăр: пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнче Орнелла Мутин – çуралнă кунĕ, вăл 55 çул тултарнă. Пурнăçĕ сĕт кӳллинче иртнĕ тееймĕн, çапах та вăл паян та питĕ илĕртӳллĕ курăнать. Нумай-нумай хĕрарăмшăн тĕслĕх шайĕнче шутланаканскерĕн вырăс тăхăмĕсем пуррине пĕлетĕр-и-ха тата?**

**Актрисăн чăн ячĕ – Франческа Романа Ривелли. Халĕ вара унăн пурнăçĕпе тата ĕç-хĕлĕпе паллашар-ха.**



## Çамрăклăх

Франческа Ривелли кукамăшĕпе кукашшĕ Ленинградран Эстоние пурăнма куçнă. Вĕсен хĕрĕ Илзе итальяна качча тухнă /мăшăрĕ врач пулнă/. Çак çемьере çутă тĕнче курнă та йĕкĕреш чиперуксем: Франческа тата Клаудиа. Сăмах май, йĕкĕрешсем пĕр-пĕринчен çĕрпе пĕлĕт пек уйрăлса тăнă. Клаудиа вăтанчăклăхпа, тирпейлĕхпе, тăрăшулăхпа, сăпайлăхпа палăрса тăнă, актриса пулмашкăн вăрттăн кăна ĕмĕтленнĕ. Хĕр пĕрчисем вуннă тултарсан ашшĕ ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Çапла çемьешĕн йывăр кунсем çитнĕ. Амăшĕ хуйхă тĕнчинчен ниепле те тухайман тапхăрта вăхăт чарăнман-çке, хĕрсем ӳссех пынă...



Клаудиа тăрăшсах кĕнекесем шĕкĕлченĕ вăхăтра Франческа ӳнер колледжне çул хывнă. Вун тăваттăри чиперкке унта çаппа-çарамас хывăнса çамрăк ӳнерçĕсене хĕр кĕлеткине хут çине куçарма пулăшнă. Хăй вун тăваттăра мар, вун çиччĕре пулнине ĕнентерсе çарамас ӳкерчĕкĕсене ятарлă журналсенче вырнаçтарма ирĕк панă. Пĕррехинче çак кăларăмсенчен пĕри ăнсăртран амăшĕн аллине çакланнă. Калаçу хивре иртнĕ, хĕрарăм намăссăр пепкине çапкаласа та илнĕ. Кĕçех хăюллă хĕр ача çинчен хыпар шкула та çитнĕ. Анчах Франческа вăтаннипе пуçне пĕкнĕ тесе шухăшлатăр тăк – йăнăшатăр. "Эпĕ çапла майпа укçа ĕçлесе илетĕп. Нимĕн япăххи те курмастăп. Тепĕр тесен, вăрламастăп вĕт-ха!" – тенĕ вăл. Шкул ертӳçисем ку тĕслĕхпе шăв-шав çĕклес темен. Ривелли тăлăх арăмăн чăнах та укçа-тенкĕ енчен ларутăру йывăррине вĕсем аван пĕлнĕ...

## Ют ĕмĕте пурнăçласа...

Пĕррехинче пĕр тăвансем хаçатра кăсăклă хыпар асăрханă – паллă режиссер Дамиано Дамиани "Самая красивая жена" фильмра тĕп рольте вылямашкăн кастинг ирттернĕ. Вăтанчăк Клаудиан унта питĕ хутшăнас килнĕ, анчах та хăюлăхĕ çитмен. Çавăнпа вăл Франческăна хăйпе пĕрле пымашкăн ӳкĕтленĕ. Пĕр тăвансене тĕрĕсленĕ хыççăн опытлă режиссер... иккĕмĕш пикине суйласа илнĕ. "Çук, манăн кинора пачах та ӳкерĕнес килмест, эпĕ пĕрле кăна килтĕм. Эсир çапах та Клаудиăна лайăхрах пăхăр-ха!" – ăнлантарма тăнă хĕр. Анчах Дамиано нимĕн те илтесшĕн те пулман. Юрать-ха çакна пула тăвансен хушшинче хура кушак чупса каçман, вĕсем пĕр-пĕринпе малтанхи пекех туслăн хутшăннă.

Çапла ют ĕмĕте пурнăçа кĕртсе Франческа хăй сисмесĕрех актриса пулса тăнă – ăна "Самая красивая жена" фильмра тĕп роль кĕтнĕ. Контракта алă пуснă, сăмахсене пăхмасăр вĕреннĕ... Шăпа çулне улăштармашкăн юлашки утăм кăна кирлĕ пулнă – Франческа валли хушма ят тупмалла. Дамиани çакна та хĕре хăех сĕннĕ – Орнелла Мути. Пĕрремĕшĕнчен, вăл вăхăтра кинора пĕр Ривелли вылянă ĕнтĕ. Унсăр пуçне, Франческа иртнĕ пурнăçĕпе сыв пуллашсан пĕрре те начар мар. Çапла майпа Франческа-Орнелла малашлăха пĕрремĕш утăмсем ярса пуснă.



## Юрату асамлăхĕ

Пĕрремĕш роль хыççăнах Орнелла нумай япалапа мăнаçланма пултарнă. Калăпăр, унăн пултарулăхне тӳрех асăрхаса хакланă, паллă режиссерсем çĕнĕ ĕçсем сĕнме пуçланă, "сарă пресса" кашни номертех тенĕ пек Орнелла çинчен çырнă...

Пĕрремĕш ĕçре Орнелла çамрăк Алессио Оранопа пĕрле вылянă. Ку каччă пирки вара çав вăхăтра шкул çулĕнчи кашни хĕр пĕрчи тенĕ пек ĕмĕтленнĕ. Алессио чун-чĕрин хĕлĕхĕсене вара Орнелла хускатнă. Шел те, пике кинори партнерне асăрхаман та тейĕн – вăл урăххишĕн çуннă.

18 çулта чиперккен юратнă çыннинчен çие юлнă. Анчах та кам пулнă телейлĕ çав арçын – паянччен те паллă мар. Çĕнĕ хыпара илтсенех Орнелла савниййĕ йĕп пек çухалнă. Тăхăр уйăхран Найке çуралнă. Хĕр пĕрчи çулталăка çитсен унăн амăшĕ Алессио Орано сĕнĕвне йышăннă – çапла çĕнĕ çемье çуралнă.

## Иккĕмĕш пурнăç. Донна Бамбина

Актрисăн пысăк пĕрремĕш ăнăçăвĕ Марио Моничеллин "Народный роман" фильмри ĕçĕпе çыхăннă. Тăван Италире ăна "Донна-бамбина" /хĕрарăм-ача/ тесе чĕнме пуçланă. Итали актрисисен уçă илĕртӳлĕхĕ никамшăн та вăрттăнлăх мар. Ун çумне ачалла тасалăх, айванлăх та темелле-тĕр, çынна шанни хушăннă. Психологсем палăртнă тăрăх, ирех мăн çынна çаврăнма тивнĕ этемре "пысăк ача" яланлăхах юлать. Астарать хĕрарăм, анчах та ăна çĕнсе илме ай-яй! çăмăл мар. Илĕртет вăл, анчах та çывăха пĕр шит те ямасть. Вăт çавăн пек хăйне евĕр "Донна-бамбина"...

Пĕр вăхăтран Орнеллăна паллă режиссер Марко Феррери сăнарта тĕрĕслесе пăхмасăрах хăйĕн фильмĕнче тĕп роль сĕнет. Ку ĕç актриса пурнăçне пысăк витĕм кӳрет. Чи малтанах, паллах, Орнелла фильмографине пуянлатать. Унсăр пуçне, хĕрарăмăн чапĕ ӳссех пырать. Мăшăрĕ ун хыççăн ĕлкĕрсе пыраймасть. Феррери вара çине тăрсах хăйĕн юратăвĕ пирки ĕнентерет...

"Последняя женщина" фильмра Орнелла Жерар Депардьепе пĕрле вылять. 1978 çулта вара экрансем çине куракан тӳрех килĕштернĕ "Первая любовь" фильм тухать. Çулталăкран актриса Совет Союзне çул тытать – кунта ăна "Жизнь прекрасна" фильмра ӳкерĕнме Григорий Чухрай чĕнет. Темиçе уйăхранах вара Орнелла Адриано Челентанопа паллашать. Унпа пĕрле эпир пурте пĕлекен-юратакан "Укрощение строптивого" фильмра ӳкерĕнет. Ыттисене кĕвĕçмешкĕн сăлтав тупăнсах тăрать, донна-бамбина нимĕнле чиперук валли те пĕр шанăç та хăвармасть.



## Чи илемлĕ кукамай

Çулсерен Орнелла Мути хутшăнакан темиçе фильм тухать экрансем çине. Актриса ӳкерӳ пĕр лапамĕнчен теприне чупать, Италирен Германие, унтан Франципе, Испание, Америкăна çул тытать вăл. Орнелла Италирен тахçанах Парижа пурăнма куçнă. Тăхăр вуннăмĕш çулсен вĕçĕнче вăл Римри чи паллă пластика хирургне Стефано Пиккалона качча тухнă. Арçынна хĕрарăмпа паллашнă чух чи малтанах унăн куçĕ тыткăнланă-мĕн. Хирург хăйĕн пĕтĕм пациентне çавăн евĕррине шантарнă.

Нумаях пулмасть актриса нимĕç паллă сериалĕнче ӳкерĕннĕ. Критиксенчен нумайăшĕ Орнеллăна тăван çĕр-шывĕнчен Парижа куçнăшăн сивлет, шăпах çакăншăн ентешĕсем ăна хăйсен ĕçĕсенче текех ӳкерĕнме чĕнмеççĕ-мĕн. Анчах та сăмах-юмаха фактсем хирĕçлеççĕ /вĕсене хирĕç вара каяймăн/: юлашки тăватă çулта Орнелла итальян режиссерсен сакăр фильмĕнче сăнарсем калăпланă. Пурĕ вара унăн – çĕре яхăн роль. Актрисăн пултарулăхне те тивĕçлипех хакланă. Чи сумлисен хушшинче – Nastro dўArgento /"Кĕмĕл хăю"/ тата Оскарăн Итали аналогĕ – Grolla dўOro. Ку ретре хăйне уйрăммăн тăракан сумлă ят та пур – "тĕнчери чи сексуаллă кукамай". Актриса хăй çакна шӳтлесе кăна йышăнать, çапах та унпа мăнаçланать те.

Пластика хирургĕпе вунă çула яхăн пурăнать пулин те Орнелла мăшăрĕн пулăшăвĕпе пачах та усă курман. Хĕрарăм сывă пурнăç йĕркине пăхăнать, уншăн Будда философиййĕ çывăх – çакă, Орнелла шухăшĕпе, шăпах çамрăклăх вăрттăнлăхĕсем. Унсăр пуçне – туйăм вылявĕ. Çĕнĕ ĕçе пикенмешкĕн нихăçан та кая мар, çакăнтан шикленмелле мар кăна.

Орнелла Мути Тосканăра иçĕм çырлин плантацине туяннă. Халĕ вăл ку енĕпе те ăнăçлă ĕçлет, хăйĕн эрехне сутать.

Çулталăк çурă каялла вара актриса ювелир япалисен хăйĕн пĕрремĕш пуххипе паллаштарнă. Чи паллисен йышĕнче – сулă. Ăна пĕрлештернĕ икĕ сăнчăр евĕр ăсталанă. Манипури /Инди/ чĕлхипе: "Юрататăн пулсан ирĕке яр", – тесе çырнă.

Нумаях пулмасть вара хаçат-журнал Орнелла Мутипе Стефано Пикколо лăпкăн та шăппăн уйрăлмашкăн тĕв тунине пĕлтернĕ. Мăшăртан пĕри те шăв-шав çĕклемен çакăншăн. Ахăртнех, пĕр-пĕрне ирĕке янă...

/"bugaga.ru"/.



## ☺И-ХИ-ХИК☺

Икĕ строитель тин кăна хăпартнă çуртра сасă мĕнле илтĕннине тĕрĕслеççĕ.

– Вася, эсĕ мана илтетĕн-и? – кўршĕ пўлĕме каять пĕри.

– Ан кăшкăр, эпĕ сана куратăп.

* * *

Психиатр:

– Депресси мĕнрен пуçланчĕ вара сирĕн?

– Пĕлетĕр-и, манăн эксарăм хальхи мăшăрпа паллашнă. Иккĕшĕ тытăçса вăрçнă. Унтан мирлешнĕ те пулас арăма иккĕшĕ пĕрле хĕненĕ.

* * *



Ёнер пĕчĕк хĕрĕмпе кушак çури ўкертĕмĕр. Паян ирхине хамăр ўкернĕ пеккинех алăк хыçĕнче тупрăмăр. Ĕнтĕ машина, кĕрĕк ўкерес шухăш пурха...

* * *

Ĕнер шкула ашшĕ-амăшĕн пухăвне кайса килтĕм. Халĕ те тĕлĕнетĕпха: эпир маларах кулерсăр, жалюзисĕр мĕнле вĕреннĕ-ши?..

* * *

Илемлĕ фильм курма питĕ юрататăп. Чылайччен шухăша кайса çўретĕп вара: çавăнти сăнарсем пек арçынсем пурнăçра пур-ши? Йĕркеллĕ, шанчăклă, хăюллă, ырă чунлă, ачасене юратаканнисем, çемье чăн-чăн пуçĕсем, эрех ĕçменнисем, казинора выляманнисем?.. Э, мансах кайнă, ĕçченнисем тата, шўте ăнланаканнисем... Арçын тенине çакăн пек ăнланатăп эпĕ, анчах, шел те, кун пеккисене пурнăçра курман, тантăшсем каласа кăтартнине те илтмен. Тен, кама та пулин çапах та ăнăçнă? Тен, кам та пулин çапах илтнĕ хăть? Илтнĕ пулсан пире те каласа кăтартăр. Е, çапах та, илемлĕ фильмра кăна пулать-и ку?..

* * *

Упăшка ĕнер ирхи тăватă сехетре таврăнчĕ киле. Эпĕ хам вăраннине палăртмарăмха, çывăрнă пек туса выртрăм. Вăл вара пукан илчĕ те ман ума пырса ларчĕ. Пĕр тапранми мана сăнаса ларать. Чăтаймарăм, куçа уçрăм.

– Мĕн тăватăн эсĕ?

– Концерт пуçланасса кĕтетĕп – малти ретре вырăн йышăнтăм акă...

* * *

Хĕрарăмсен хушшинче чăн-чăн туслăх пулма пултараймасть теççĕ... Уявра пĕрле савăннă хыççăн тусăм мана киле сĕтĕрсе çитерчĕ, пиллĕкмĕш хута çавăтса хăпарчĕ, упăшка аллине парса хăварчĕ... Питĕ лайăх, анчах та... эпĕ пĕрремĕш хутра пурăнатăп тата манăн... упăшка та çук...

* * *

Паян ирех савнирен СМС çыру çитрĕ. "Салам, хевелем! – çырать хайхи Ё тăррине лартмасăр. – Муньча кĕме кайăпăр-и? Е мен тума кăмăл пур?" Мĕн тума кăмăл пур кун пек çыру илнĕ хыççăн? Орфографи словарĕпе пуçĕнчен шаплаттарас килсе кайрĕ кăна.

* * *

Литва шалти ĕçсен министерстви ыйту парать: мĕншĕн Украинăн пĕр пайĕнче Раççей ялавĕ вĕлкĕшет? Мĕн тĕлĕнмелли пур кунта? Пĕрремĕшĕнчен, пирĕн ялав хитре. Иккĕмĕшĕнчен, Украинăра 2014 çул – Раççей ялавĕн çулталăкĕ. Виççĕмĕшĕнчен, нумай ыйту парсан сирĕн пата та пырса çакатпăр.

* * *

Арçын юлташне каласа парать:

– Манăн арăм савăшнă хыççăн калаçма питĕ юратать.

– Мĕн япăххи пур вара кунта?

– Мĕн лайăххи пур тата? Эпир унпа тахçанах уйрăлнă ĕнтĕ, вăл вара халĕ те кашнинчех киленнĕ хыççăн ман пата шăнкăравлать.

* * *

Америка Раççее экономика блокадипе хăратать. Мĕн тумаллине те пĕлместĕп ĕнтĕ... Чипссăр, кока-колăсăр, вискисĕр мĕнле пурăнăпăр ĕнтĕ?.. Мĕн тăвăн, ирĕксĕрех ăшаланă çĕр улми, пулă вăлчи, сысна какайĕ çисе сăмакун ĕçес пулать ĕнтĕ...

* * *

Виççĕмĕш класра вĕренекен Машенька асламăшĕ çинчен çырнă сочиненирен. "Асанне вăл – ачасăр хĕрарăм, çавăнпа ыттисен пĕчĕк пепкисемпе выляма юратать. Асатте те – çав асаннех, анчах та – арçын. Вăл арçын ачасемпе ытларах хутшăнать тата вĕсем пулă тытма кайни çинчен калаçма юратаççĕ. Асанне нимĕн ĕçлемесĕр пурăнать, хăнана кăна çўрет. Вăл ватă, çавăнпа унăн сикме тата чупма юрамасть. Ачасене вăл ярмăрккана илсе çўрет. Унта пире каруççельпе ярăнтарма укçа нумай пулмалла унăн. Ачасемпе уçăлса çўренĕ май асанне темĕнпе те кăсăкланать: е симĕс çулçăпа, е майĕпен шăвакан ăманпа... Асанне куçлăхпа çўрет тата унăн шăлĕсем çăмăллăнах тухаççĕ. Асанне ытла ăслах мар, вăл ансат ыйтусене кăна хуравлама пултарать. Сăмахран, "Йытăсем кушаксене мĕншĕн хăвалаççĕ?" е "Ăманăн пуçĕ хăш вĕçĕнче?" Кашни ачан асламăшĕ пултăр тесе тăрăшмалла, мĕншĕн тесен вĕсем кăна ачасене: "Кайха, манăн вăхăт çук!" – тесе хăваламаççĕ...



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

**Извещение о проведении аукциона**
**на право заключения договоров аренды**

Автономное учреждение Чувашской Республики «Издательский дом «Хыпар» Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в открытом аукционе на право заключения договоров аренды (далее - аукцион) объектов недвижимости, являющихся государственной собственностью Чувашской Республики.

**Почтовый адрес, номер контактного телефона аукционной комиссии:** Автономное учреждение Чувашской Республики «Издательский дом «Хыпар» Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики: 428019, г. Чебоксары, ул. пр. И. Яковлева, д. 13

**Контактное лицо:** Степанов Эдуард Вячеславович, начальник службы обеспечения- юрисконсульт, тел.: 89674780612

**Информация о проведении аукциона:**

Для участия в аукционе заявитель должен предоставить заявку установленного образца. Заявки для участия в аукционе принимаются в **616 кабинете** по адресу организатора аукциона со дня размещения его в сети интернет на сайте http://torgi.gov.ru

Срок окончания приема заявок на участие в аукционе **«31» марта 2014 г. в 16-00 часов.** Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д.13, каб. 616, а также в сети интернет на сайте http://torgi.gov.ru

**Требования к участникам аукциона:**

В аукционе может принять участие любое юридическое лицо на условиях, предусмотренных документацией об аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе в соответствии с требованиями, установленными документацией об аукционе, состоится на заседании комиссии **«01» апреля в 09-00 часов** по адресу организатора аукциона.

Аукцион проводится в присутствии членов комиссии и участников аукциона **«14» апреля в 09-00 часов.**

Победителем аукциона признается участник аукциона, предложивший наилучшие условия, определяемые в порядке, предусмотренном аукционной документацией.

Протокол аукциона подписывается всеми присутствующими членами комиссии в день аукциона.

Договор аренды с победителем аукциона должен быть подписан не позднее чем через 10 рабочих дней со дня подписания членами Комиссии протокола аукциона.

## П Р О Д А Ю

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**6.Песок, гравмассу,** чернозём, торф, **щебень,** кирп. бой с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**7.Срубы** для бани. Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

## П Р О Д А Ю

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**134.Кирпич, кольца, ФБС блоки.** Д-ка манипулятором. Т. 44-73-53.

**144.Кирпич, керамблок, кольца.** Дёшево. Д-ка. Т. 213680.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

## УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**115.Наркология. Трезвая жизнь.** Т. 8-902-663-20-80.
*Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-937-014-49-97.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.


## ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

Эпĕ 53 çулти арçын. Хам юратăва тĕл пулса авланасшăн. Чăваш Ен тулашĕнчи ялта ĕçлесе пурăнатăп. Ман пата куçса килме килĕшекен 30-54 çулсенчи хĕрарăм шăнкăравласса кĕтетĕп. Ача пурри – чăрмав мар. Тел. 8-902-234-40-25.


«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – А.И.ИЗМАН

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службы 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

Çырăнмалли индекс: 11515

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, "Чăваш хĕрарăмĕ"

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тўлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи"** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 9204. Заказ 923.